Суратаймасассăн та юрамалли çук, суратсассăн та... • 3 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

27 (845) №, 2014, утă, 5 Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Çĕр-аннене пуç çапмасăр çырла та пухма çук. 2 стр.

Нимĕç улпучĕ чăваш каччине хăйĕн хĕрĕпе пĕрлештересшĕн пулнă. 4 стр.

Чăваш Енре Раççей паллă писателĕ, публицисчĕ халăхпа тĕл пулчĕ. 5 стр.

Тумтир вăрттăнлăхĕ. 8 стр.

Хĕртен арăм тăвайман. 9 стр.

Ĕмĕре пĕр такăнмасăр ирттерме май пур-ши? 10 стр.

Миледи пулмасан та амăшĕ ывăлĕшĕн халĕ те хитре. 11 стр.

4 стр.

Етĕрнесем юрла-юрла... çумăр çутараççĕ

Ял-йыш йĕрки — пурнăç йĕрки.

Каларăш.



	кăнтăрла	çĕрле
05.07	+18	+ 7
06.07	+20	+ 9
07.07	+22	+ 9
08.07	+24	+11
09.07	+25	+16
10.07	+27	+15
11.07	+22	+15

Китай çывăхланнă

Республика кунĕ тĕлне Етĕрне районне Китай 30 артисчĕ килсе çитнĕ. Пĕтĕм ял клуба утнă çав кун, залра ларма кăна мар, тăма та вырăн юлман. Чăваш йăлипе хăнасене çăкăртăварпа, юрăпа хапăлласа кĕтсе илнĕ. Культура çурчĕн ертӳçи Лидия Скворцов ют-çĕр шыв çыннисене хăналассишĕн ăшталаннă кăна. Мĕн çитермелле вĕсене? Канфет-печени, икерчĕ янтăланă, 6 тĕрлĕ курăкран симĕс чей вĕретсе хатĕрленĕ. Чăнах та, чăваш кучченеçне тиркемен хăнасем, уйрăмах чей килĕшнине пĕлтернĕ.

«Артистсен сцена костюмĕ питĕ нумайччĕ, анчах пысăк кутамккапа кĕнине асăрхамарăмăр-çке. Кустăрмаллă чăматанĕнче электричество ятарлă хатĕрĕ пур-мĕн вĕсен, çавăнпа çи-пуç тирпейлĕн майлашăнать», – асăрханă Лидия Николаевна.

Концерт хыççăн артистсене Ачакри кафене илсе кайнă. Унта вĕри яшкапа, хĕрлĕ пулăпа ăшаланă çĕр улмипе сăйланă. Хăнасем хăйсемпе пĕрле техĕмлĕх чиксе çӳреççĕ иккен. Çавна кирек мĕнле апата та хушаççĕ е сĕрсе çиеççĕ. Çăкăра вара, хурине те, шуррине те, тĕкĕнмен те вĕсем, хуплăвăн питне кăна кăмăлланă. Газ хушнă нимĕнле шыва та ĕçмеççĕ иккен вĕсем.

Пирĕн тăрăх хăнасене чылай тĕлĕнтермĕшпе астарнă. Пахча çимĕç епле ӳснипе кăсăкланнă. Улăхра çӳрекен кĕтĕве те пырса пăлхатнă: лăпкăн кавлесе выртакан ĕнесене тăратсах сăн ӳкерме тытăннă.

Акатуйра Мускавра

Юлашки кунсем уявран пуян пулчĕç. Мăн Явăшри «Выла» пултарулăх коллективĕ Чăваш наци конгресĕ йыхравланипе хăй те Мускавра иртнĕ пĕтĕм чăвашсен Акатуйне кайнă. 2003 çулта йĕркеленнĕ ушкăн çулсеренех республика тулашне тухма май тупать. «Чĕмпĕрте иртнĕ Акатуй халĕ те манăçран тухмасть. Уявра «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат валеçетчĕç, çĕнĕ номерсем марччĕ, эпĕ вĕсене килте вуланăччĕ ĕнтĕ. Пĕр арçын кăларăма ярса илчĕ те кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ, хаçата чуп тăвать хăй. Çавна курсан манăн чун пăчăртанчĕ, куççуль тухрĕ. Çывăх тăванпа каласшăн пек чылайччен уйрăлаймарăмăр аякри йăхташăмăрсенчен...» – аса илчĕ Лидия Скворцова.

МАТТУРСЕМ



Эх, пахчи, сырла пахчи

Каç пулса хĕвел тусен хушшине анса пытансан та вĕсем пахчаран кĕме васкамаççĕ-ха. Тепĕр кунне ирхи шуçăмпах вăранаççĕ те каллех ĕçе пикенеççĕ: çĕр çырли пуçтараççĕ. Кашни кун 20-30 витре татса тултарасси çăмăл мар паллах /халĕ ялта ĕлĕкхи пек пулăшма çӳрекен те юлман/. Кайран тӳрех сутмашкăн Ĕпхĕве вĕçтереççĕ. Сад-пахча ĕçне юратакан Герасимовсем çуллахи вăхăтра Пушкăртстанри Авăркас районĕнчи Треппел ялĕнче пурăнаççĕ. Хĕллене Ишимпай хулине куçаççĕ.

Пахчара хам та нимере чылай пулнă, хĕвел çинче пиçсе темиçешер сехет те çырла пуçтарнă. Пан улми пысăкăшшине вара пĕрремĕш хут вĕсен патĕнче кăна çисе курнă.

30 сотка çĕр çинче çĕр çырлин темĕн тĕрлĕ сорчĕ те ӳсет: «Лорд», «Кардинал», «Первоклассница», «Елизавета», «Фестивальная». Вĕсем пурте – шултра йышшисем. Çаврăнăçуллăскерсем калчасене аякран кӳрсе килнĕ. Çĕр çырли хура çĕр çинче никĕнле им-çам сапмасăрах кашни çул витри-витрипе йăтăнать кăна.

Кураксене хăратма

Тул çутăлнă-çутăлман пахчана кураксем сырса илеççĕ. Вĕсенчен пĕр канăç та çук çырла ӳстерекенсене. Юлашки вăхăтра нумайлансах кайнине калаççĕ ял çыннисем. Хайхисем çырлана хытă тапăнаççĕмĕн. Вĕсене хăратма пахча тулли катемписем тăратса тухни те пулăшмасть. Дисксенчен çеç тараççĕмĕн. Пĕрмай çилпе силленсе ларни, хĕвел çинче вăйлă çутатни хытă хăратать пулмалла. Çапла майпа кăна сыхланаççĕ кураксенчен.

Упаленмесĕр çырла çиеймĕн

«Çĕр-аннене пуç çапмасăр çырла та татма çук» тесе ахальтен каламан çав ваттисем. Çырла ӳстересси пĕртте ансат мар. Кăна ĕçлесе курнă çын кăна лайăх ăнланать. Ирхине пахчана тухаççĕ те каçхине çеç пӳрте кĕреççĕ Герасимовсем. Калчасене çĕнетсех тăраççĕ, кашни кун шăвараççĕ, çĕре кăпкалатаççĕ, çумлаççĕ... Çырла пухасси те хăвăртах пулмасть. Витресене тултарсанах сутма тухса каймалла. Киле каялла илсе тавранни нихăçан та пулман. Тутар-пушкăрт халăхĕ çырла варенипе чей ĕçме юратать. Тепĕр чухне 50 витрепе çула тухни те пулать.

Тупăшне пытармаççĕ вĕсем. Пĕр килограмм çырлана 200-250 тенкĕпе вырнаçтараççĕ. «Ылтăн» пахчаран çулленех сахал мар укçа-тенкĕ пухăнать. Хулари хваттерте юсав ĕçĕсем ирттерме, сĕтел-пукан туянма тата ялти стройка валли усă курнă унпа. Нумай пулмасть икĕ хутлă çуллахи кухня, ун çумĕнчех гараж хăпартса лартнă.

Пахча тулли кĕл чечек

Хитре пурăнма пĕлеççĕ вĕсем. Лида аппа кĕл чечек юратать. Ытармалла мар пĕчĕк пахчинче мĕн тĕрли тата мĕн тĕсли кăна çук-ши? Вĕсемсĕр пуçне тата çĕрçĕр тĕрлĕ чечек садра. Халь шăпах çурăлнăран картишне калама çук ырă шăршă сарăлнăччĕ. Хура хăмла çырли, иçĕм çырли, кашкăр çырли те сад тулли. Мăшăрĕ вилнĕ хыççăн ывăлĕпе тата кинĕпе пурăнать Лида аппа. Вĕсене хавхалантарса, пулăшса пырать. Мăнукĕсене те хăй çумĕнчен ниçта та ямасть. Тахçан çак вырăнта унăн ашшĕпе амăшĕ пурăннă. Вĕлле хурчĕ нумай тытнăран ялти чи тулăх та ĕçчен çемье шутланнă. Вĕсемпе ку тăрăхра никам та танлашма пултарайман. Ватăсем вилес умĕн ачисене пил парса хăварнă, аяккалла тухса каяс пулсан та çак вырăна ют çынна памасса ыйтнă.

Аслисем каланине шута илни куç кĕрет. Ӳркенмеççĕ, ĕçрен хăрамаççĕ вĕсем. Пахчара тăрмашнисĕр пуçне хĕлле çисе пурăнма индокăвакалсемпе хур чĕпписем, бройлерсемпе кроликсем ӳстереççĕ Герасимовсем. Мал ĕмĕтпе пурăнаççĕ. Юр кайса пĕтсенех яла килеççĕ те хура кĕркуннепе кăна хулана таврăнаççĕ.



ХĂНАРА

«Ку чиртен сывалаймастăп»

Юлашки хут Александр Савельев-Сас патĕнче хăнара пилĕк çул каялла пулнăччĕ. Ун чухне мăшăрĕ Феодосия Федоровна та пурăнатчĕ-ха. Пылпа, çырла варенийĕпе чей ĕçсе сĕтел хушшинче вăрахчен калаçса ларнăччĕ. Шел те, виçĕ çул каялла ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă мăшăрĕ. Кĕçĕн ывăлĕпе тата кинĕпе пурăнать халь арçын.

Çак кунсенче пĕр талăклăха çеç тăван тăрăха – Пушкăртстана – кайса килме май пулчĕ. Аякри çывăх çыннăмсемпе тăвансем тунсăхлаттараççĕ çав. Александр Сас писатель, журналист пирĕнтен инçетре пурăннине, вăхăчĕ ахаль те хĕсĕккине пăхмасăрах ун патне тепĕр хутчен çитсе килтĕм. Таçтан аякранах асăрхарăм ăна: мана кĕтме урама тухса тăнă. Кил умĕнчен иртсе каясран пăшăрханнă вăл. Ватăлмасть-ха Александр Савельев. Кĕçех 82 çула çитет тесен никам та ĕненмĕ.

Хресчен пурнăçĕ

– 25 çул шкул, тепĕр 20 çул хаçат пурнăçĕпе пурăнтăм. Халĕ вара эпĕ чăнчăн хресчен, – терĕ Александр Сергеевич.

Савельевсен сад пахчинче темĕн тĕрлĕ улма-çырла йывăççи ӳсет. Вĕсене йăлтах Александр Сергеевич пăхса тăрать. Çĕр ĕçне юратаканскер кунĕпех пахчара тăрмашать. Çуркунне йывăç тунисене шуратать. Кинне помидор лартма, кайран тĕмсене çыхса пулăшать. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх пулнă май ку кил-çуртра, чăн та, ĕç нумай. Сурăхĕсем вуннă ытла. Унсăр пуçне пĕр ĕне, вăкăр, хĕл каçнă тына, кăçалхи пăру...

Çамрăксенчен маларах вăранать шур сухал. Кашни кунах ирхи пиллĕкре тăрса ялти пĕвене пулла васкать. «Çанталăк сулхăнрах тăнă май пулă ытлах лексе каймарĕ юлашки вăхăтра», – палăртать вăл.

54 çул пĕрле

Пулас мăшăрĕпе Александр Сергеевич салтакран таврăнсан шкулта паллашнă. Иккĕшĕ пĕрле ĕçленĕ. Феодосия Федоровна химипе биологи вĕрентнĕ. Ăна вара, Германире виçĕ çул çарта тăнăскере, çитнĕ майăнах нимĕç чĕлхи шанса панă. Çавăн пекех физкультура та ертсе пынă.

– Çĕнĕ çулта пирĕнтен 30 çухрăмри Нукасак ялне сăрт-ту урлă, вăрман витĕр 12 лашапа хĕр илме кайрăмăр. Эх, чăваш туйĕ епле илемлĕ иртнĕччĕ! Авланнă çулах пӳрт лартса уйрăлса тухрăмăр, – аса илет çамрăк чухнехине писатель.

Феодосия Федоровна виçĕ çул каялла тăрук уйрăлса кайнă.

– Эпĕ райцентра Толпаса кайма пуçтарăннăччĕ. Мăшăрăм аптекăран эмел илсе килме каларĕ. Мĕн-мĕн кирлине хут çине çырма тытăнтăм. Диван çинче лараканскер çав вăхăтра минтер çине хуллен тӳнсе кайрĕ те калаçайми пулчĕ. Темиçе минутран вилсе кайрĕ. Çывăх çынна пытарма, унран уйрăлма питĕ йывăр. 54 çул пĕрле килĕштерсех пурăнтăмăр. Вăл манăн ĕçе ăнланатчĕ. Тепĕр чухне кăна: «Çутă çунтарса мĕн çĕрĕпе ларатăн? Кан-ха», – текелетчĕ.

Вăрçă ачисем

Александр Сергеевичăн ашшĕ Пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннă. Ялтан пĕрле тухса кайнисемпе нимĕçсем патĕнче виçĕ çул тыткăнра пулнă. Чирлесе таврăннă унтан. Сывалайман, 1948 çулта хĕне кайса вилнĕ. Виçĕ ывăлне амăшĕ пĕчченех çитĕнтернĕ. «Анне 91 çула çитсе вилчĕ. Марфа Трубинапа пĕр çулхискерччĕ вăл. Уйăхне 12 тенкĕ пенси илсе пурăнаканскер виличчен виçсĕмĕре те пиллесе 100-шер тенкĕ парса тухрĕ. Вăт, анне чунĕ мĕнле вăл! Ачисене пулăшас тесе çимесĕр пуçтарнă ĕнтĕ ăна», – çывăх çынни пирки ăшшăн аса илчĕ Александр Сергеевич. Вăрçă пуçланнă чухне 9 çулта çеç пулнăскер ун чухнехи нушаллă та тертлĕ пурнăçа лайăх ас тăвать. Урам тăрăх выляса çӳреймен вăл вăхăтра. Çăкăр çисе курас тесе иртен пуçласа çĕрлеччен аслисемпе тан уйхирте тар тăкнă. Çав çулсенчи ачасене халалласа «Куççульлĕ çăкăр» повесть çырнă Александр Савельев. Ал çырăва Чăваш кĕнеке издательствине ярса панă. «Вăрçă чарăннăранпа çитес çул 70 çул пулать. Тен, çавна халалласа кăларĕç те», – шанчăкпа, çутă ĕмĕтсемпе пурăнать çыравçă.

Ултă мăнук

Мăнукĕсемшĕн савăнать Александр Савельев. Вĕсем унăн улттăн. Сăн ӳкерчĕкĕсене стена çине çаксах хунă. Чи кирли – аслашшĕн-кукашшĕн ĕçне хаклаççĕ, хисеплеççĕ вĕсем. Пĕри качча тухнă хыççăн Голландире пурăнать. Кĕçĕн ывăлĕн Кольăн ачисем иккĕшĕ те – Ĕпхӳре. Таня аслă шкулта нанотехнолога вĕренсе тухнă хыççăн заводра инженерта ĕçлет. Саша Ĕпхӳри радиоэлектроника колледжне пĕтернĕ. Халĕ МЧСра тăрăшать.

Пĕр чарăнми шаккать машинка

Компьютер та сĕтел çинчех ларать. Анчах та хăнăхнă йăлапа пичет машинкипе пĕр чарăнми шаккать те шаккать Савельев-Сас. Иртнĕ çул Чăваш кĕнеке издательствинче унăн «Эпир – ял ачисем» кĕнеки пичетленсе тухнă. Пушкăртстанра тухса тăракан «Урал сасси» тата районти «Авăркас хыпарçи» хаçатсенче унăн очеркĕсемпе статйисем, сăвви-калавĕ тăтăшах пичетленеççĕ. Уйрăмах çыравçăн шӳтлĕ калавĕсемпе сăввисене юратаççĕ вулакансем. Пирĕн кăларăмсенче те унăн хайлавĕсем час-часах тĕл пулаççĕ.

«Ку чиртен эпĕ нихăçан та сывалаймастăп. Çырасси – чир ĕнтĕ вăл», – сыв пуллашрĕ манпа Савельев-Сас.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Страницăна Елена АТАМАНОВА хатĕрленĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

Судья мар, психолог кирлĕ

Маргарита ИЛЬИНА

Улăм витнĕ пĕчĕк пӳртре хунямапа пĕрле темиçе кин пĕр тĕпелте кăштăртатнине, ара, ун чух чăваш хĕрарăмĕ 1-2 ача çуратнипех çырлахман, илтсен хальхи çамрăксен çăварĕ тĕлĕннипе карăлсах каять-тĕр. Тен, ун чухне те сак тулли ача çуратмĕччĕ хĕрарăм, анчах медицина вăл вăхăтра хальхи шая çитмен, çие юлассинчен сыхланмалли мелрен те пит пуянах пулман-тăр çамрăк арăмпа упăшка. Тепре шухăшласан, ялта яланах ĕç тăкăнса тăрать, йышлă семьесĕр епле пуçтарса пĕтермелле ăна. Юратьха халĕ темĕн тĕрлĕ техника та пур та, çулла пахчакартара ĕç вĕресе кăна тăрать. Ачи-пăчи вара... Пирĕн вăхăтра кăна-ха, иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче, хĕлле уй-хир йĕлтĕр, çунашка йĕрĕпе касăлатчĕ, çулла пĕве хĕрринче çуйăхатчĕ вĕт-шакăр. Аслисен те пурнăçĕ ĕлĕкхи марччĕ ĕнтĕ. Авланни-мĕнĕ уйрăлса тухма тăрăшатчĕ. Çапах та çамрăксем хулара тымар ярас йăла вăй илсе пыма пуçланăччĕ. Çак ĕмĕте пурнăçа кĕртме ун чухне, паянхипе танлаштарсан, çăмăлрахчĕ те: вĕреннĕ вăхăтра çемье çавăрнисене студентсен общежитийĕнчех кĕтес уйăрса паратчĕç, ĕçлекен яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа та ведомство çурчĕсенче пӳлĕмпе тивĕçтеретчĕç. /Халĕ ку, чăн та, юмахри пек кăна туйăнать/. Çак вăхăталла сайра-хутра кăна ашшĕ-амăшĕ тупса панă çынпа мăшăрланатчĕç çамрăксем. Ирĕке тухнăскерсем пулас кинпе е кĕрӳпе кăна паллаштаратчĕç ашшĕ-амăшне. Мĕнле йăхран вăл, ратни епле – кун пирки аслисен пуç çĕмĕрсе тавçăрмалли кăна юлатчĕ. Ывăлĕн е хĕрĕн, юратупа çунатланнăскерĕн, пулас мăшăрĕн çитменлĕхĕсене асăрхас шухăш-и унта? Шел, çакă кая юлса палăрать çав. Нумай чухне пĕрремĕш чăрмавранах такăнать тин чăмăртаннă çемье. Паллах, пур çамрăк та йывăрлăхсене тӳрех парăнса туртана икĕ еннелле çавăрать теме çук. Çемье – ачашлану-савăшу кăна мар, яваплăх та, тӳсĕмлĕх те, кулленхи ĕç те. Çакна, телее, чылайăшĕ ăша хывать. Шел те, пурте мар çав... Ĕлĕк чăвашăн çемье аркатас, упăшкаран е арăмран уйрăлас йăла пулман теççĕ. Çапах та çак каларăшăн тымарĕ авалтанах килет ахăр: кайиччен – кайиччен каяс, кайиччен кайсан – анне каяс... Паян, ĕлĕкхи пек, хайхи улăм тăрăллă мунча евĕр çуртсенче те пурăнмастпăр, хунямасене те уявсенче кăна куратпăр, пĕр кухньăра темиçе кин хуçаланассинчен тур сыхлатăр. Çапах та çемьесем те ĕлĕкхи пек çирĕплĕхпе палăрса тăмаççĕ...

Федераци патшалăх статистика службби пĕлтернĕ тăрăх, çемье арканас тĕлĕшпе 2013 çулта Чăваш Ен çĕршывра 17-мĕш вырăн йышăннă. Атăлçи тăрăхĕнче иртернĕ "Чи çирĕп çемьесемлĕ регион" рейтингра вара пирĕн республика 5-мĕш вырăна тухнă. Лару-тăру тахçанах чан çапмаллине пĕлтерет. Çакна кура Юстици министерстви ку енĕпе тăрăма ятарласа тĕпченĕ хыççăн çакă палăрнă: 2013 çулта уйрăлнă çемьесен 83 проценчĕ суд урлă татса панă ыйтăва, 15 проценчĕ, çула çитмен пĕрлехи ачисем çуккине кура, ЗАГС органĕсем пулăшнипех хутшăнусен вĕçне пысăк пăнчă лартнă, юлашки пайĕнчен мăшăртан пĕрне 3 ытларах çул ирĕклĕхсĕр хăварнă.

Статистика кăтартăвĕсемпе тавлашаймăн, анчах мĕн пытаннă процентсен хыçне? Цифрăсен чаршавне сирсе пăхар-ха. ЗАГС официаллă кăтартăвĕсем тăрăх, республикăра пĕлтĕр 9287 çĕнĕ çемье чăмăртаннă. Аван темелле. Чăваш йăхне тăсма тăрăшать-ха апла пулсан. Анчах та... иртнĕ çул 4657 мăшăр хăй текех пĕр сукмакпа утаймассине пĕлтернĕ. Куратпăр ĕнтĕ, уйрăлакансем – мăшăрланакансен çуррине яхăнах. Тата маларахри çулпа танлаштарсан уйрăлакансен йышĕ 5 процент ӳснĕ те...

Лаша та такăнать теççĕ... Пурăнан пурнăçра темĕн те пулать. Улшăнчĕ самана – мĕн тăвăн? Пĕр-пĕрне тишкерсех çемье çавăрма тăрăшать халĕ яш-кĕрĕм. Каччăсем авланичченех хĕре тĕрĕслесе пăхма хыпаланаççĕ: çие юлать-и е çук-и? Юлсан – илмелле. Çук тăк... Халĕ яшсене, тĕлĕнмелле те, амăшĕсемех çапла вĕрентнине пĕрре кăна мар илтнĕ. Анчах çие юлни, ача çурални кăна тытса тăраймасть, курăнать, паянхи çемьесене... «Эсĕ мана ачапа хăвăн çумна çыхса хурасшăн-и-ха?» – çĕтĕлет каярахпа арçын. Тамаша, çуратсан та юрамалли çук, çуратаймасан та.

Тем тесен те, урăхларах воспитани кирлĕ-тĕр паян яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа. Специалистсем палăртнă тăрăх, арканакан çемьене нумай чухне судья вердикчĕ мар, квалификациллĕ психолог пулăшăвĕ кирлĕ. Нумай мăшăр, йăнăшсене тӳрлетсе, пĕрлех пурăнма шухăшлĕччĕ. Шел, кун пек пулăшупа усă курасси анлă сарăлман-ха пирĕн тăрăхра. Ĕлĕкрех чăваша ăру çыхăнăвĕ çăлса пынă. Аслисен ăслă канашĕ тем тесен те паян та çамрăксемшĕн ытлашши мар-тăр. Анчах шăпах çакна, аслисене хисеплеме, вĕсене тăнлама, манса пыратпăр мар-и халĕ?

АС ТĂВĂМ

Унăн ячĕ – чĕререх

Пирĕншĕн, чăвашсемшĕн, Совет Союзĕн виççĕмĕш космонавт летчикĕ, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ Андриян Григорьевич Николаев генерал-майор – чăннипех çутă çăлтăр.

2004 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕ пирĕн республикăмăрăн историйĕнче хура тĕспе çырăнчĕ – Андриян Григорьевичăн чĕри ĕмĕрлĕхех тапма чарăнчĕ. Хăй çуралнă, ялан асра тытнă тăван кĕтесĕнче канăç тупрĕ вăл. Ăна юлашки çула ăсатма чăвашсемпе пĕрлех ют çĕр-шывран килнĕ хăнасем, ытти халăх ывăл-хĕрĕ, ĕçтешĕсем йышлăн хутшăнчĕç.

Андриян Николаев пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнăранпа виçĕм кун, утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче, вунă çул çитрĕ. Çав кун унăн тăван тăрăхĕнче – Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче – асăну митингĕ иртрĕ. Ăна «Эткер» этнокультура лагерĕнче канакан ачасем уçрĕç. Вĕсем сăвăсем вуларĕç, космонавтăн «Вĕç-вĕç, куккук» юратнă юррине юрларĕç. Кĕçнерни кун Шуршăлти Мемориал комплексне пин-пин çын пухăнчĕ. Ăна сума суса пуç тайма республикăри хуласемпе районсенчен, республика тулашĕнчен тĕрлĕ ăру çыннисем йышлăн килчĕç. Асăну митингне Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата хисеплĕ ытти хăна хутшăнчĕ. Часавайри вил тăпри çине чĕрĕ чечексем хучĕç. Андриян Николаевăн ачалăхĕ иртнĕ çурта кĕрсе курчĕç.

Космонавтика Музейĕнчи Асăну каçĕ каçхи телекĕперпе вĕçленчĕ. Мемориал комплексĕпе Мускаври космонавтика музейĕ çыхăнчĕ. Унта та Андриян Николаева халалласа Асăну каçĕ ирттернĕ.

Тĕнче уçлăхне икĕ хут кайса килнĕ Андриян Николаев пин-пин çын чĕринче-асĕнче упранать. Çак юрату, хисеп туйăмĕ нихăçан та иксĕлмĕ. Вун-вун ăру Андриянăмăра сума суса, асра тытса пурăнĕ. Эпир те ăна ырă, ăшă туйăмпа аса илетпĕр, пуç таятпăр.

Елена АТАМАНОВА.

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ

Ача шăпине тата парать... экзамен

Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕн пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштармашкăн ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов массăллă информаци хатĕрĕсене пресс-конференцие пуçтарчĕ.

Кăçал 14 экзамента йĕркене пăснă пурĕ 27 тĕслĕхе шута илнĕ: Патăрьел районĕнче – 12, Шупашкарта – 6, Комсомольски районĕнче – 3, Шăмăршă районĕнче – 2, Йĕпреç, Куславкка, Елчĕк, Тăвай районĕсенче – 1-шер. Ятарлă комисси йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн айăпа кĕнисем çитес çул кăна тепĕр хут экзамена килĕç.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, вырăс чĕлхипе – 12-ĕн, математикăпа 120 çамрăк экзамен тытайман. 11-ĕн вара икĕ тĕп предметпа та кирлĕ чухлĕ балл пухайман. 80 тата унтан пысăкрах баллисен хисепĕ – 2135 çын /20,32%/, вăл шутра 100 бала çитнисем – 44-ăн. Чăваш Енри вăтам кăтарту Раççейринчен пур предметпа та пысăкрах.

«ППЭ ачан шăпине татса паракан пĕртен пĕр хатĕр мар, вĕсенчен пĕри çеç пулмалла» , – çакна палăртсах каларĕ Владимир Николаевич.

– ППЭ кăтартăвĕсем хăш муниципалитетра пысăкрах, хăшĕнче пĕчĕкрех? – кăсăкланчĕ ĕçтешсенчен пĕри.

– Экзамен шайĕ çулран çул ӳсет. Çавăнпа та кăтартусене танлаштарма çук. Начарришĕн айăплас тĕллев лартман, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмашкăн тĕплĕ тишкерӳ тума палăртатпăр: районпа, шкулпа, учительпе, вĕренекенпе – уйрăмшар. Пирĕншĕн чи кирли – ача шкултан мĕнле пĕлӳпе тухса кайни. Педагогика процесĕ питĕ кăткăс – унта йăлтах витĕм кӳрет-çке, çавăнпа та пĕр учителе, шкула айăплани йăнăш пулĕччĕ. Яллă хăш-пĕр районти кăтартусем пире пăшăрхантараççĕ паллах, райцентрти, хулари шкулсенче вăл чылай пысăкрах, – çапла çеç уçăмлатрĕ министр.

Кăçал экзамен тытайманнисене мĕн кĕтет? Вĕсен шăпине йĕрлеççĕ-и? Ку ыйтусем ведомство ертӳçине те канăç памаççĕ. «Манăн шухăшпа, ППЭ икĕ шайра иртмелле: аслă пĕлӳ илес текенсен тата ыттисен пурин те. Шкултан аттестатпа тухайманнисене те рабочи специальноçне алла илмешкĕн май туса памаллах», – пĕтĕмлетрĕ министр.

ППЭн икĕ тĕп предмечĕ – вырăс чĕлхипе математика – çумне çитес çулсенче ют чĕлхе предмечĕ хушăнасси халех паллă. Мĕнле чĕлхе суйлассине çамрăк хăй татса парĕ. Çакăн пирки ыйту хускатсанах чун пăчăртанчĕ: «Чăваш чĕлхи вара?..» Мана çеç мар, ĕçтешĕмсене те хумхантарать иккен вăл: «Чăваш чĕлхи предметне обязательнăй йĕркепе тытмалли экзамен шутне кĕртеççĕ-и?» – илтĕнчĕ ыйту.

– Чуна ыраттаракан чи çывĕч ыйту ку. Федераци переченьне наци чĕлхипе экзамен тытассине кĕртменнипе çамрăксем хушма тепĕр предметпа ĕçлĕ пулса ларасшăн мар. Кăçал чăваш чĕлхипе пĕлĕвне тĕрĕслес шухăшпа 30-ăн ыйту çырнăччĕ, анчах экзамена пĕри те пыман. Республикăра икĕ патшалăх чĕлхи хуçаланнă май тăван чĕлхе сумне çĕклесси, вăл шутра – унпа экзамен тыттарасси те, пирĕн тивĕç тесе шухăшлатăп. Чĕлхене аталантармашкăн профиль шкулсем, меслет кĕнекисем тата ытти те кирлĕ. Ку тĕлĕшпе ĕçлемелли, чăн та, нумай, – пĕтĕмлетрĕ Владимир Иванов çывăх вăхăтра чăваш чĕлхине ППЭ тĕп предмечĕсен йышне кĕртме шантарса.

Алина ИЗМАН.

АСĂРХĂР!

Уçă чӳрече ачашăн хăрушă

ЧР сывлăх сыхлав министрĕ Алла Самойлова республика Пуçлăхĕ ирттернĕ Координаци канашĕнче пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи 5 уйăхра республикăра 0-17 çулсенчи 57 ача вилнĕ /пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 79/.

Кăçалхи статистика уйрăмах хăрушă. Çĕртмен 24-мĕшĕ тĕлне «03» служба çӳллĕшрен ӳксе шар курнă 1-5 çулсенчи 13 ачана пулăшу панă. Шел, иккĕшне çăлайман. «Пепкесем «ăнăçлă» чӳречесенченех ӳкеççĕ», – палăртнă Алла Владимировна. Инкек сăлтавĕ – тимсĕрлĕх.

Çӳçентерекен юлашки тĕслĕх çĕртмен 8-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Шупашкарти Ярмăркка урамĕнчи пĕр çуртăн 10-мĕш хутри хваттер чӳречинчен çулталăк çурăри хĕр ача ӳкнĕ, ашшĕ-амăшĕ ăна асăрхавсăр хăварни паллă.

Лиана ВАНИНА.

«ÇАВРА СĔТЕЛ»

Чăваш Ен экологийĕпе кăсăкланнă

«Раççей çемйи» Нацисен общество комитечĕ «Çут çанталăк экологийĕ – çемье тата сывлăх экологийĕ» проект шучĕпе студентсем валли ятарлă маршрут йĕркеленĕ. Вăл 13 куна пырать. Маршрут Мускав, Константиново, Пенза, Тольятти, Ĕпхӳ, Красноусольск, Мелес, Чĕмпĕр, Шупашкар хулисем урлă выртать.

Пирĕн регионпа паллашасси Шăмăршă районĕнчи «Чăваш вăрманĕнчен» пуçланнă. Çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче туристсем Шупашкарта иртнĕ «çавра сĕтеле» хутшăннă. Унта ЧР Çут çанталăк министерствин, ведомство организацийĕсен, общество пĕрлешĕвĕсен представителĕсем, студентсем пухăннă. Республикăри çут çанталăк ресурсĕсем, экологи культури, уйрăмах упрамалли объектсемпе вырăнсен хальхи тăрăмĕ пирки туристсем валли кăсăклă материал хатĕрленĕ.

Чăваш Енри çул çӳреве «Раççей çемйи» Нацисен общество комитечĕн тĕп директорĕ Александр Плотников пĕтĕмлетнĕ.

Анна ГЕРАСИМОВА.



ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

Ĕçчен çыншăн пур çул та уçă



Уяртсанах ял çынни пахчана тухрĕ. Çумăрпа ӳссе кайнă çум курăкпа кĕрешмелле, çырла та пиçет авă. Сывласа тăранмалла мар ырă шăршă – тин кăна çулса пăрахнă курăк шăрши – хуçаланать тавралăхра. Анкартинче, уйра утă пакусĕсемпе куписем куçа илĕртеççĕ... Ял ĕçченĕн пушă вăхăт пĕртте çук çулла. Çапах та çак вăхăта кăмăллать вăл, унăн илемĕпе киленме те, уявсенче канма та пĕлет.

Юмахри пек...

Илемлĕ пĕр кун Етĕрне районĕнчи Мăн Явăша пырса кĕтĕмĕр. Капаш пӳрчĕсемпе, таса урамĕсемпе тӳрех илĕртрĕ вăл. Сăваплă Николай ячĕллĕ чиркӳ, «Выла» физкультурăпа спорт комплексĕ, пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕн офисĕ – йăлтах çĕнĕ. Кунтах парк та, ача-пăча лапамĕ, шкул пурри пурнăç вĕресе тăнине палăртаççĕ. Çĕнĕ урам хута кайни, патшалăх тĕрлĕ программипе усă курса çуртсем çĕкленни ял çыннисемпе администраци ертӳлĕхĕн тăрăшулăхне çирĕплетеççĕ. Кунашкал чаплă ФСК, республикăри райцентрсемсĕр пуçне, нихăш ялта та çук-ха! Унти тренажер залне халăх тӳлевсĕрех сывлăха çирĕплетме çӳрет. Ку юмах мар – чăнах та çапла. Советскинчен, Ачакран та çынсем килеççĕ. Икĕ хутлă çуртра культура çурчĕ те, библиотека та вырăн тупнă. Чӳречисенчен пăхсан пĕтĕм ял ывăç тупанĕ çинчи пекех курăнать. Тем чухлĕ тинкерсен те çапкаланчăксемпе ĕçкĕçсене асăрхамарăм. Чылайăшĕ вырăнтах хăйсен ĕçне йĕркеленĕ, фермер хуçалăхĕпе, суту-илӳпе тупăш тăвакансем те сахал мар. Ахальтен мар ку тăрăхра пушă выртакан çĕр çук, кашни лаптăка хуçисем типтерлĕн пăхса тăраççĕ. «Ялтах укçа ĕçлесе илме пулать, калча ӳстерсе, милĕк çыхса сутатпăр. Сĕт юр-варĕ те тупăш кӳрет. Арçынсем техникăпа калăмран калăма çӳреççĕ», – палăртать ял-йыш. «Пурнăç йывăр, укçа çук», – тесе кахал кăна нăйкăшать çав. Чăннипех кăмăла кайрĕ ку ял.

Купса хушамачĕ

Мăн Явăшри Расторгуевсем патне çул тытрăмăр. Тĕрĕсрех, Виссарион Михайловичсем патне. Расторгуевсен йăхĕ çав тери йышлă. Тăвансем пĕр урамрах пурăнаççĕ, çурчĕсем пĕри тепринчен чаплă. Ĕлĕкех вĕсем пуян ратă шутланнă, пыл туса илессипе, суту-илӳпе чапа тухнă тесен те йăнăш мар.

Авалах, XVIII ĕмĕртех, тăхăмсенчен пĕри Мускава ĕçлеме кайсан çак хушаматпа таврăннă. Унта вăл 2-мĕш гильди купси патĕнче пурăннă, чылай çĕнĕлĕх вĕреннĕ. Купса чăваш арçыннине ĕç хатĕр-хĕтĕрĕпе пĕрле хăйĕн хушаматне те парнеленĕ. Яла таврăнсан арçын та суту-илӳ пуçарнă. Анчах вăл туса лартнă икĕ хутлă çуртсенче ачисем ырлăх курса пурăнайман, революци вăхăтĕнче тухса тарма тивнĕрен яла килсе курăнман. Купса 1898 çулта çĕкленĕ пӳртсем халĕ те лараççĕ. Вĕсемпе малтанах шкул, кайран клуб, фельдшер пункчĕ евĕр усă курнă.

Несĕл йывăççи

Виссарион Михайлович – 77 çулта, вăл 40 çул ытла шкулта ĕçленĕ, чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ. Мăшăрĕ çĕре кĕнĕ хыççăн икĕ çула яхăн пĕчченех пурăнать. Хисеплĕ ватă чылайранпах несĕл йывăççине тĕпчет. «Эпĕ вилсен ачасемпе мăнуксем тăванĕсене, кампа пĕрле ĕçсе-çинине пĕлччĕр хăть», – уçăмлатать ӳркенменскер. Унăн ашшĕ Михаил Степанович икĕ вăрça хутшăннă. 1918-1922 çулсенче вăл нимĕç улпучĕ патĕнче тыткăнра пурăннă, лашасем пăхнă. «Михел, акă сана словарь, кашни кун 15 сăмах вĕрен», – хушнă ăна хуçа. Çапла 4 çулта Михаил нимĕçле ирĕклĕн калаçма кăна мар, юрлама та хăнăхнă. Улпут ăна хăйĕн патĕнче яланлăха хăварма, хĕрне качча пама та килĕшнĕ. Анчах чăваш каччин чунĕ тăван тăрăхах туртнă. Кунта вăл пуш-пушă, чӳречисене хăмапа çапса хăварнă, тĕп çурта таврăннă. Кăштахран çак ял хĕрĕпе Марфăпа çемье çавăрнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланиччен мăшăр 7 ача çуратма ĕлкĕрнĕ. 1942 çулта Михаил Степанович, 50-ран иртнĕскер, фронта тухса кайнă, Псков облаçĕнчи Великие Луки таврашĕнче çапăçнă. Нимĕçле лайăх пĕлекенскер тăлмачă та пулнă. «Атте çĕрле кĕперсем тунă çĕрте чылай нуша курнă. Çавăнтах хамăр ялти Аверьян та ĕçленĕ, анчах тĕттĕмре пĕр-пĕрне курайман вĕсем, – каласа кăтартать Виссарион Михайлович. – Анне пире, 7 ачине, мĕнле асаппа çитĕнтернине аса та илес килмест, ăна хăвăрах тавçăратăр пулĕ...» Вăрçăран Михаил тĕрĕс-тĕкелех таврăннă, ун хыççăн 8-мĕш пепкине кун çути кăтартнă.

Вĕренни – çутă

Марфа Дмитриевна хутла пĕлмен, çапах та математика задачисене тĕшмĕртнĕ вăл, ăсрах питĕ хăвăрт шутланипе пурне те тĕлĕнтернĕ. Темле йывăр пулсан та хăйĕн тĕпренчĕкĕсене вĕрентессишĕн тăрăшнă Марфăпа Михаил. «Советскине – 15 çухрăм, 8-мĕш класа унти шкула çăпата сырса кайрăм. Вĕреннĕшĕн 150 тенкĕ тӳлемеллеччĕ. Çапах та атте-анне мана та, пиччене Генăна та шкула ячĕ. 300 тенкĕ – çемьешĕн пысăк тăкакчĕ», – аса илчĕ Виссарион Михайлович. Расторгуевсен 8 ачинчен 6-шĕ аслă пĕлӳ илнĕ, пурте вырăс чĕлхи учителĕ пулса тăнă, хĕр ачасем çеç вĕренеймен, вĕсен пысăк йыш валли пир тĕртсе çи-пуç çĕлеме, кил-тĕрĕшри ытти ĕçпе пиçĕхме тивнĕ.

Виссарион Михайлович хĕсметре чухне журналистикăпа кăсăкланнă. Çар хастар корреспондентне маршал Тав хучĕпе чысланă. Гонорарпа яш «Победа» сехет туяннă. Ăна паянхи кунченех упрать вăл. Шел, лешĕ «утма» пăрахнă ĕнтĕ. Çар хыççăн йĕкĕте Урал университечĕн журналистика факультетне вĕренме йышăннă. Унта Виссарион Расторгуев куçăн мар майпа 3 çул ăс пухнă, кайран Шупашкарти аслă шкула вырăс филологи факультетне 5-мĕш курса тӳрех куçнă. Пурнăç çулне вăл тăван ялти шкулпа çыхăнтарнă.

Хуçалăхра – сурăх кĕтĕвĕ

Виссарион та, Геннадий те авлансан мăшăрĕсене тĕп киле илсе пынă, пĕр пӳртре вĕсем 4 çул пурăннă. Тĕпелте икĕ кинпе хунямăшĕ хуçалансан та чашăк-тирĕк шакăртатни пулман çемьере. «Аннене эпир алă çинче йăтса çӳреме хатĕрччĕ. Пĕр-пĕрне сивĕ сăмах каласа курман. Кĕçĕн кине вĕрентсе каланине эпĕ те ăша хываттăм та ĕçе вăл каланă пек пурнăçлаттăм», – каласа кăтартать Геннадий Михайловичăн мăшăрĕ Нина Демидовна.

Геннадий Михайловичпа Нина Демидовна Расторгуевсем патне те çитрĕмĕр. Иккĕшĕ те вĕсем ĕмĕрĕпех учительте тăрăшнă, «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Сăмах май, Расторгуевсен династийĕ 1500 çултан та иртнĕ, паянхи кун та вĕсен тăхăмĕсем вĕренӳ тытăмĕнче тăрăшаççĕ.

«Тивĕçлĕ канăва тухсан та пулла кайма вăхăт тупаймастăп. Карта хыçĕнчи пĕвене карп та ятăм ĕнтĕ», – паллаштарать пурнăçĕпе Геннадий Михайлович. Вăл та, унăн ывăлĕсем те – хурт-хăмăр ăстисем. Хисеплĕ çак ватăсем канма пĕлеççĕ-ши? Килти хуçалăхра вĕсен паян – 53 пуç сурăх-путек. Ялта çак выльăха тытакан çукпа пĕрех халĕ, ял кĕтĕвĕнче те ĕнесем кăна. Расторгуевсен сурăхĕсем уйрăм çӳреççĕ, вĕсене ачисемпе мăнукĕсем, ватăсем хăйсем те черетпе пăхаççĕ. Çулталăкра миçе хутчен какай шӳрпи çиеççĕ-ши кусем? Ăна та, шашлăкне те пĕçерсех тăраççĕ-мĕн. «Хуран тĕпĕнче юлман-ши?» – апат вăхăчĕ тахçанах иртнĕрен явăнчĕ пуçра шухăш. Шӳрпине тĕпленĕ пулин те сĕтел çине сурăх какайĕ тухса ларчех. Ырă кăмăллă хуçасем турилккене чышкă пысăкăш аш татки хурса пачĕç...

Чун киленĕçĕ тупăш та кӳрет

Мăн Явăш тăрăх эпир Виссарион Михайловичăн киннĕпе Маринăпа çӳрерĕмĕр. Çĕмĕрле районĕн пики телейне çак ялта тупнине, кунтан илемлĕрех вырăн уншăн çуккине пытармарĕ. Расторгуевсем мĕн ĕлĕкренех пыл хурчĕ тытнă, халĕ те кашнинех анкартинче вĕлле ларать, вăрманта утар тытакан та пур. Чун киленĕçĕпе пĕрлех тупăш та кӳрет-çке вăл. Маринăпа Михаил, тĕслĕхрен, пыл сутма Мускава çитеççĕ. Чăвашсен паха таварне хапăлласах туянаççĕ-мĕн унта. Ĕçченшĕн пур çĕрте çул уçă, тĕрĕсех ку та...

Пыл, сурăх какайĕ çисе Алина ИЗМАН çӳренĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

Етĕрнесем юрла-юрла... çумăр çутараççĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Кăçал Мускаври Измайлово кремлĕнче «Выласене» чи сумлă хăнасене кĕтсе илнĕ çĕре чĕннĕ. Чăваш шупăрĕ тăхăннă Михаил Михайлов, Михаил Долгов, Виктор Егоров купăсçăсемпе, Владимир Григорьев параппанçăпа кам кăна сăн ӳкерĕнменши?

«Суту-илӳ речĕсем тăрăх утаттăмăр. Тир çĕлĕксем сутакан вырăнта чарăнтăмăр та калпак хакĕпе кăсăклантăмăр. «Юрласа памасăр – каламастăп», – шахвăртрĕ сутăçă. «Çумăр çăвать» юрра шăрантартăмăр вара. Чăнах та, çумăр çурĕ вăл кун. Çапах та вăл кăмăла пăсмарĕ», – каласа кăтартрĕ пултарулăх ушкăнĕнче чылайранпа чун киленĕçĕ тупнă Альбина Разумова.

«Пĕрле сăн ӳкерĕнес тĕллевпе Раççей халăх артисчĕ Станислав Садальский патне пытăмăр, унăн тараватлăхĕ тĕлĕнтерчĕ пире. Çын мĕн чухлĕ ăнăçлăрах, çавăн чухлĕ ансатрах çав», – палăртаççĕ хавхаланупа таврăннă хĕрарăмсем.

Алина ТИМОФЕЕВА.

ТЁЛ ПУЛУ

Уçлăх – карапсемпе, çĕр-шыв – гастарбайтерсемсĕр...

Иртнĕ эрнере Чăваш Ене Александр Проханов писатель, публицист килсе кайрĕ. Чи малтанах вăл Республика Ертӳçипе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă, республика пурнăçĕпе кăсăкланнă. Александр Андреевич Чăваш Енре Изборск клубĕ уçма сĕннĕ. Унăн эксперчĕсем Раççейĕн тулаш тата шалти политикине тĕпчеççĕ. Тĕллевĕ – регионти элитăна çĕршыв аталанăвĕшĕн пĕрле ĕçлеме чĕнесси.

Александр Проханов – хăйĕн шухăшне никамран хăрамасăр уççăн калакан аналитик. Тĕнчере, çĕр-шывра пулса иртекен лару-тăрăва хакланине радио, телеканалсенчи тĕрлĕ ток-шоура пĕрре кăна мар илтме тӳр килнĕ. Вăл – Раççейшĕн пăшăрханакан патриот. Проханов хуласемпе заводсем çĕкленĕ, тĕнче уçлăхне карапсемпе ракета вĕçтернĕ, çапкаланчăксемпе гастарбайтерсемсĕр, олигархсемсĕр Хĕрлĕ Империе, ĕç çынни яланах кирлĕ пулнă саманана мухтать, çĕр-шыва çĕклесси тавра вĕçĕмех хĕрӳ калаçать. Çавăнпах-тăр халăх ун еннелле туртăнать.

Илемлĕ литературăри унăн хайлавĕсем чи малтан обществăпа политикăшăн пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмалла. Александр Андреевич – вун-вун ытла роман, çавăн чухлех повеç, нумай-нумай калав, очерк, тĕрленчĕк, литература статйисемпе корреспонденцисен авторĕ.

Шупашкар çыннисемшĕн те унăн пултарулăхĕ ют мар, Проханова халăх пĕлет, сума сăвать. Наци библиотекинче йĕркеленĕ тĕл пулăва хутшăнни çакнашкал пĕтĕмлетӳ тума май пачĕ те. Мероприяти миçе сехетре пуçланассине уçăмлатас тĕллевпе вулавăша шăнкăравларăм: «Маларах килсе вырăн йышăнăр, паян çынсем иртенпех кăсăкланаççĕ», – асăрхаттарчĕ ĕçченсенчен пĕри. Чăнах та, пушă вырăн çукпа пĕрехчĕ. «Пĕлнĕ пулсан ытларах та килеччĕç-и тен?» – хăлхана кĕчĕ залра ларакансен калаçăвĕ. Пухăннисенчен чылайăшĕ – аслă ăрурисемччĕ.

Çыравçăпа пĕрле зала Пĕтĕм Раççейри «Родина» политика партийĕн регионти уйрăмĕн председателĕ Владимир Михайлов, асăннă партин членĕсем кĕчĕç. Малтанах Александр Проханов хăйĕн пултарулăхĕ пирки каласа кăтартрĕ. Пурнăçа вăл ӳнерçĕ куçĕпе хаклать. Хайлавĕсенче тĕп вырăнта патшалăх, Раççей историйĕ йышăнаççĕ. Литературăра патшалăх сăнарне Проханов пек уçса пани пулман та темелле. Çыравçă ĕмĕрĕ совет саманин юлашки вунă çуллăхĕпе, хăрушă 90-мĕшсемпе пĕр килнĕ. Пурнăç тӳнтерлĕхĕпе çыравçăсем хăйсен хĕç-пăшалĕпе кĕрешме тăрăшнă-ха, анчах чылайăшĕ тахçанах шăпланнă ĕнтĕ. Александр Проханов 72-ре те пултарулăх çулне туптама вăй-хал тупни тĕлĕнтерет. Çывăх вăхăтра вăл Украина лару-тăрăвĕпе çыхăннă литература хайлавĕ шăрçалама ĕмĕтленет.

1970 çултанпа «Литературная газета» корреспонденчĕ пулнă май вăл яланах пурнăç вĕресе тăнă чи хĕрӳ вырăнсенче пиçĕхнĕ: Афганистан, Вьетнам, Камбоджа, Никарагуа, Чечня вăрçисен, Черномобыль трагедийĕн кунтеленĕ пулнă. Халĕ те политика çивĕч ыйтăвĕсене хускатать. Патшалăх мĕнле чăмăртанни, вăй илни, унтан – арканни, тамăк хыççăн ура çине тăма хăтланни – çаксем уншăн кăсăклăх çуратаççĕ, хайлавĕсенче тĕп шăнăр пулса тăраççĕ.

Тĕл пулăва килнĕ халăх чылай ыйту хатĕрленĕ. Украинăпа Раççей хушшинче вăрçă тухасси пурне те шиклентерет. Украинăри вырăс хулисенче тăхлан алхасать, халăх пирĕн çĕр-шывран хӳтлĕх кĕтет... Мĕн кĕтет Раççее? Çакăн пирки хăйĕн шухăшне уçăмлатрĕ сумлă хăна. «Вырăс халăхне пирĕн правительство нихăçан та пăрахмасть. Унсăрăн эпир сутăнчăка çаврăнăттăмăр, кайран хамăра курайми пулăттăмăр. Эпир, ахаль çынсем, кăмăлтуйăмпа пурăнатпăр, президент – ăспа. Çапла, Раççейшĕн лару-тăру çивĕч халĕ. Кĕç-вĕç пирĕн çарсене Украинăна кĕртсе ярасси патнех çитрĕ, анчах ку утăма тумарĕ. Мĕнрен хăрать-ха Путин? Пĕрремĕшĕнчен, политикăпа экономика тăнăçлăхне упраса хăварасшăн вăл, иккĕмĕшĕнчен йăлтах мирлĕ вĕçленессе кĕтет. Вырăс халăхне хӳтлĕх енĕпе кăна мар, ыттипе те пулăшать Раççей. Украинăн кăнтăр-хĕвел тухăç пайне фашизмран çăлса хăварма май килмесен мĕн кĕтĕ? Терроризм вăй илсе сăтăр тăвас хăрушлăх пур», – терĕ Александр Проханов. Вăл хакланă тăрăх – вăрçĕ вĕçĕ хальлĕхе курăнмасть-ха.

Совет Союзĕ арканнин сăлтавĕпе кăсăкланакан та тупăнчĕ – разведка мĕншĕн сиссе юлайман? «Унран мар, Путин НАТО спецслужбисен сăмси айĕнче Крыма епле «çаклатнинчен» тĕлĕнмелле», – кашни ыйту валли тивĕçлĕ хурав тупăнчĕ сăмах ăстин.

«Пурнăç йывăр», «пенси пĕчĕк» тесе çыравçăран çăлăнăç кĕтнĕн тилмĕрекен те тупăнчĕ. Писатель влаç ертӳçи те, депутат та мар-çке. Тепĕр енчен, ку та ăна шаннине, пысăка хурса хакланине пĕлтерет. Çакăнтан пахи калем ăстишĕн мĕнех пултăр?

«Тĕнчепе, тус-юлташпа манăн ӳнерçĕ, писатель, философ, вĕрентӳçĕ тата чуна уçса паракан пек калаçассăм килет, мĕншĕн тесен кунçулăм питĕ вăрăм, çавăнпа та çак пурнăç пирки каласа кăтартмалли сахал мар», – çапла палăртать вăл хăйĕн çинчен. Тĕл пулу икĕ сехете яхăн пычĕ пулин те Проханова татах та итлеме хатĕрччĕ. Унăн витерӳллĕ сăмахĕнче çынлăх тĕшши палăрчĕ, тавра курăмĕн вĕçĕ-хĕррисĕр анлăшĕ илĕртрĕ.

Алина ИЗМАН.
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

АХ, АНЧАХ...

Килти канфет

Тăхăр вуннăмĕш çулсене ас тăватпăр-ха. Манса кайман. Пирĕнтен аслăраххисем, паллах, ун пеккине кăна мар тӳссе ирттернĕ. Анчах пирĕнтен кĕçĕнреххисем, çав шутра ачамăрсем те, сахал мар курчĕç темелле.

Ас тăватпăр ĕнтĕ, чи малтан хваттершĕн тӳлеме тăрăшаттăмăр. Пĕр-икĕ уйăх тӳлеймесен – пĕтрĕ пуç! Çука юласси ним те мар. Хăшĕсем, вăхăтра тӳлейменнине пула, ытлашши нумай пухăнса кайнă парăма татаймарĕç. Хваттерсĕр-кĕтессĕр тăрса юлакансем пулчĕç. Теприсем Мускава ĕçлеме кайса та çапçара таврăнчĕç. Мĕн кăна тӳсмерĕ халăх. Нумайăшĕ килте çăкăр пĕçерме пуçларĕ. Хура çăнăхран. Килте пĕçернĕскер тутлăччĕ çапах та. Сахăр, макарон таврашĕ – талонпа. Пĕррехинче пирĕн талонсем çухалчĕç. Ниепле те шыраса тупаймарăмăр. Пĕр уйăх сахăрсăр пурăнкаларăмăр. /Кайран, чылай вăхăт иртсен, тупăнчĕç, – хулăн кĕнеке ăшĕнче пулнă/. Эпир, аслисем, чăтăпăр-ха. Анчах ача-пăча пылакшăн кастарать. Аса илсен пĕрре чун ыратать, тепре кулас килет.

– Анне-е, канфет пар! – минретет пĕчĕк ывăлăм.

– Канфет туянма укçа çук, – тетĕп.

– Манăн пу-ур! – сиксе тăрать урайĕнче выляса ларакан ача. – Акă, анне.

Хайхискер мана икĕ-виçĕ сарă вак укçа парать. Матрешка пукане ăшĕнче укçа пухать вăл.

– Ку сахал, – ăнлантаратăп ăна. – Кунпа нимĕн те памаççĕ.

– Эпĕ сана юратмастă-ăп, – йĕрет вăл кутăнлашса.

– Кама юрататăн?

– Кӳршĕсен йытă çурине-е-е.

Амăшĕ темерĕн çав. Ачана тем кăларса парăттăм. Сасартăк пуçа пĕр ăслă шухăш пырса кĕчĕ. Пирĕн Владик, тĕрĕссипе, канфет мĕнне пит пĕлсех те каймасть. Пĕчĕкчĕ вăл ытла та. Килте пĕçернĕ хĕрлĕ кăшман пур манăн. Ăна шуратрăм та вĕтĕ «кубиксем» касса вакларăм. Ачана чĕнсе илтĕм хайхи.

– Акă сана канфет, – тетĕп.

Арçын ача теттисене пăрахса чупса пычĕ. Пĕрре ман çине, тепре шурă турилккери кĕрен «канфет» çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те пĕрне илсе тутанса пăхрĕ. Куçĕ çиçрĕ. Пĕрин хыççăн теприне илсе хыпма пуçларĕ хайхи.

– Уй, анне! Питĕ пылак канфет. Ăçтан тупрăн?

– Ку килти канфет, – ăнлантаратăп ăна. – Çиех. Пысăк пулăн.

– Килти канфет? – тĕлĕнет ача. – Татах пар, анне.

Ачасен ӳсмелле. Глюкоза çитмен ахăр...

Унтанпа вăхăт нумай иртрĕ. Владик çуллĕ те яштака, хитре йĕкĕт пулса тăчĕ. Мускавра вĕренет. Каникул вăхăтĕнче çеç килсе каять. Ывăлăм таврăнассине пĕлсенех эпĕ кукăль, пицца пĕçерсе хатĕрлетĕп. Чăх ăшалатăп. Пĕчĕк чухне çителĕксĕр пурнăçпа пурăннине кура халĕ те пулин ăна сăйлама тăрăшатăп. Пĕррехинче вăл мана чăннипех тĕлĕнтерчĕ. Эпĕ хатĕрленĕ апат-çимĕç хушшинче тем çитмен пек ун-кун пăхкалать.

– Мĕн-и?.. Чейне вĕрирех туса парас-и? Сахăрпа-и е пылпа ĕçетĕн-и? – хыпăнкалатăп эпĕ. Владик мана куçран пăхать:

– Пурте пур, анне. Тавах. Анчах... пĕлетĕн-и, манăн мĕн çиес килет?

– Хура тул пăтти-и?

– Çук, – кулкалать Мускав хăйи.

– Тата мĕскер? «Мунча чулĕ-и?» – шӳтлетĕп эпĕ.

– Анне, манăн килти канфет çиес килет, – терĕ ывăлăм...

Лидия САРИНЕ.

Аш-какайра – сиенлĕ микробсем

Çулсерен Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн ĕçченĕсем чĕр чунсен организмĕнче, вĕсенчен хатĕрленĕ продукцире тата выльăх апатĕнче усă курма юраман, сиенлĕ япаласен юлашкисем пуррине палăртас тĕллевпе аш-какай, пулă, сĕтурăх, çăмарта тата тĕрлĕ хутăш тĕлĕшпе лабораторире ятарлă тĕпчев ирттереççĕ.

Кăçалхи кăтартусем сисчĕвлентереççĕ: Вăрнар, Елчĕк, Етĕрне районĕсенче мăйракаллă шултра выльăхăн какайĕнче сиенлĕ микробсем /кишечные палочки/ тупса палăртнă. Çĕрпӳ районĕнчи пысăк пĕр хуçалăхри сысна какайĕнче вара кунсăр пуçне КМАФАнМ текен микроорганизмсем виçерен 40 хут нумайрах пулни çиеле тухнă.

Пай пуçлăхĕ Надежда Емельянова каласа панă тăрăх, ветеринарипе санитари йĕркисемпе килĕшсе тăман продукци кăларнă предприятисен тĕлĕшпе тĕрĕслевсем йĕркелĕç. Лару-тăрăва малашне те сăнасах тăрĕç. Продукци пахалăхĕ чакнин сăлтавне уçăмлатас тĕллевпе 3 уйăх таранах лаборатори тĕпчĕвĕсем ирттерĕç.

Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.

АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

Пăшăхланă пулă

3 скумбри /600 грамм/, 3 çĕр улми, 2 сухан, 150 грамм майонез, тутă каламалăх тăвар, пăрăç кирлĕ.

Шуратнă çĕр улмине çавракан турамалла. Сухана вакламалла. Пулла вакламалла, тутă каламалăх тăвар, пăрăç сапмалла.

Çатмана фольга сармалла, ун çине çĕр улми, çиелтен пулă касăкĕсем хумалла. Сухан сапмалла та майонез сĕрмелле. Фольгапа чĕркесе пулла 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 40-50 минут пăшăхламалла.

Коралл утравĕ

Икĕ бутерброд валли 2 татăк шурă çăкăр, 2 сосиска, 50 грамм хытă сыр, 1 помидор, 2 шăл ыхра, тăвар, тутă каламалăх техĕмлетекен çимĕççем, майонез кирлĕ.

Сыра теркĕламалла. Сосискăна, ыхрана вĕтетмелле. Помидора тăваткал евĕр вакламалла. Техĕмлетекен çимĕççем, майонез хушмалла, пăтратмалла.

Хутăша çăкăр çине сĕрмелле, 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 15 минут пĕçермелле.

Тăпăрчă йăви

300 грамм тăпăрчă, 1 апат кашăкĕ хăйма, 2,5 стакан çăнăх, 0,5 чей кашăкĕ çунтарнă апат соди, 100 грамм вĕтетнĕ ăçтăрхан мăйăрĕ, çиелтен сапмашкăн сахăр, тип çу кирлĕ.

Тăпăрча, хăймана, çăнăха, апат содине пĕрлештермелле те чуста çăрмалла. Çаврашкасем туса икĕ сехетлĕхе сивĕтмĕше хумалла. Кайран кăлармалла та йăваламалла, мăйăр, сахăр сапса сивĕтмĕше хумалла. Унтан тип çу сĕрнĕ çатмара 200 градус таран хĕртнĕ духовкăра 20-30 минут пĕçермелле.

«Конверт»

1 лаваш, 150 грамм хытă сыр, 2 çăмарта, симĕс сухан, тип çу, тăвар кирлĕ.

Сыра теркĕламалла, çăмартана пĕçермелле, турамалла, сухана вĕтетмелле. Çимĕççене тăвар сапса пăтратмалла. Лаваша тăваткалласа касмалла, кашнин варрине хутăш хумалла, конверт евĕр хуçлатмалла. Вĕсене тип çура ылтăн тĕс çапиччен икĕ енчен ăшаламалла.

Беларуç салачĕ

1 банка консервланă шампиньон, 0,5 килограмм чăх пĕверĕ, тăварланă 2 хăяр, пĕçернĕ 2 çăмарта, пуçлă 1 сухан, 100 грамм майонез, тутă каламалăх тăвар, тип çу кирлĕ.

Шампиньона, сухана, чăх пĕверне вакламалла. Пурне те уйрăммăн ăшаламалла.

Хăярпа çăмартана улăм пĕрчи евĕр турамалла, йăлтах пĕрлештермелле, тăвар сапмалла, майонез хушмалла.

Пудинг

3 апат кашăкĕ какао, 2 апат кашăкĕ шĕвĕ хăйма, 60 грамм сахăр, 125 миллилитр сĕт, вĕтетнĕ 125 грамм сухари, 50 грамм услам çу, 2 çăмарта, 1 апат кашăкĕ коньяк, теркĕланă 2 апат кашăкĕ миндаль, 0,5 апат кашăкĕ апат соди, 60 грамм çăнăх кирлĕ.

Какаопа сухари хутăшне сĕтпе пăтратмалла, 10 минут лартмалла. Çăмарта шуррине сарринчен уйăрмалла, миндаль măйăрне вĕтетмелле. Услам çăва сахăрпа хутăштармалла, 2 çăмарта сарри, çăнăх, сухари, миндаль, коньяк хушмалла. Чуста çăрнă çĕре сахăрпа пĕрле пăтратса кăпăклантарнă çăмарта шурри ямалла. Пудинга духовкăра 1 сехет пĕçермелле. Вăл ваниль соусĕпе уйрăмах тутлă. Ăна хатĕрлеме ансат. Çăмарта саррипе çăнăха ваниль сахăрĕпе пăтратмалла, вĕри сĕт хушса вĕретмелле.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

Сăпса йăвине пĕтерме...

Краççын сапни пулăшать. Çĕр çинчи сăпса йăвине вара сероуглерод хутăшĕнче йĕпетнĕ мамăкпа хупламалла, унтан тăпрана тикĕслемелле. Ас тăвăр, сероуглерод патĕнче шăрпăк чĕртме юрамасть.

Тĕм çине пылак шыв янă кĕленче çакмалла. Сăпса унта кĕрсе ӳкĕ.

Кăткă тĕммине салатма

10 литр шыва 400 грамм тикĕт супăнĕ, 2 апат кашăкĕ карбол йӳçекĕ, 10 апат кашăкĕ краççын ямалла. Çак хутăша кăткă тĕмми çине сапмалла. 2-3 хут сапсан çак вырăнтан кăткă сивĕнĕ.

Унсăр пуçне кăткă иленнĕ вырăна формалин хутăшĕ /10 пай шыв пуçне 1 пай формалин/ тăкма юрать.

* * *

Чылай чухне утюг шурă япала çинче сарă йĕрсем хăварать. Çакнашкал мелсемпе ăна хăвăртах тасатма пулать.

- Утюга хĕртмелле те хут çине сапнă тăвар çийĕн темиçе хут сăтăрмалла. Вăл çăмăллăнах тасалĕ.
- Енчен те утюг якатнă вырăнта йĕр хăварать пулсан ăна уксусра йĕпетнĕ мамăкпа, кайран çăм татăкпа сăтăрăр.
- Хуралнă утюг шăл пастипе те лайăх тасалать. Ăна нӳрĕ çĕтĕк çине пăртак тумлатмалла та лайăх сăтăрмалла, кайран çăм пусмапа шăлса илмелле.

КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ

Вăйлă çумăр – пурнăçри улшăнăва,

çиллĕ вăйлă çумăр – йывăрлăха е пурнăçри лару-тăру тивĕçтермессе,

çумăр айне лекни – тахçантанпах канăç паман ыйтусенчен хăтăласса, куççуль витĕр чуна тасатасса, çĕнĕ пурнăç пуçласса,

кивçенре пурăнакан çын вăйлă, аслатиллĕ çумăр курсан – кĕçех парăма йăлтах тӳлесе татасса,

çумăр кăштах çуни – телейлĕ те лăпкă пурнăçа,

çумăр айне лекни, анчах та йĕпенменни – ĕмĕтсем пĕр чăрмавсăрах пурнăçланасса,

çуллахи ăшă çумăр – çывăх çынсемпе хутшăну лайăхланасса,

сивĕ, вăраха кайнă çумăр – çывăх çынпа хутшăну пăсăласса,

сивĕ çумăра чӳречерен сăнани – ăнăçăва,

шалкăм çумăр айне лекни – çывăх вăхăтра укçа хушса тӳлессе,

çумăр айĕнче çи-пуç йăлтах йĕпенни – пур çын умĕнче те чуна уçма юраманнине асăрхаттарать, чире е ĕçри чăрмава,

çумăрта çӳç вăйлă йĕпенни – хĕрӳллĕ юратăва,

çумăр шывĕпе пуçа çуни – юлташсемпе вăхăта лайăх ирттересе,

пӳрт тăрринче ташлакан çумăрпа киленни çемьери телее пĕлтерет.

ЫЙТУ-ХУРАВ

Килти тыр-пултанах

Эпĕ килти хуçалăхра сысна ферми уçасшăн. Хальлĕхе манăн 5 уйăхри икĕ пуç кăна-ха. Выльăх валли хам тĕллĕн комбикорм хатĕрлесе пăхасшăн. Урпа, сĕлĕ, тулă, пăрçапа соя – алă айĕнчех. Тыр-пул пĕр витре хутăшне пĕршер ывăç тăвар, пурă ярса авăртасшăн. Çак апатпа сыснасене тăрантарма юрать-ши?

Н.НИКОЛАЕВ.

Пăрça е соя виçи 3% пулсан та çителĕклĕ, тăвара та чакармаллах, мĕншĕн тесен сысна-семшĕн вăл вилĕмпе танах. Çавăн пекех минерал витаминсен премиксĕ хушма юрать.

ШУТА ИЛМЕ

Туттир вăрттăнлăхĕ

Кĕске ура, сарлака хул пуççи, пысăк хырăм... Мĕнех вара? Пур енчен те илемлĕ кĕлетке питех те сахал. Нумайăшĕн çитменлĕх тупăнатех. Хĕрарăмăн сăн-пит, кĕлетке илемне тĕрлĕ тапхăрта расна хакланă. Ĕлĕкрех кăпăшка ӳт-пӳллĕ хĕрсене килĕштернĕ, халĕ çинçе пилĕклĕ те çӳллĕ хĕрсем подиум çине тухаççĕ. Юлашки вăхăтра тулли кĕлетке илĕртӳлĕхĕ пирки тавлашакан та пур. Çапах та тĕрĕс тумтир суйласан çитменлĕхсене пытарма, кĕлеткен хитре енĕсене палăртма пулать иккен.

Лутра пӳллĕ хĕрарăмсен вăрăм жакетпа вăрăм е кĕске сарлака юбка тăхăнмалла мар. Кĕске жакета вăрăм юбкăпа, вăрăммине кĕске юбкăпа, вăрăм çанăллă, тăрăхла йĕрлĕ кĕпе тăхăнмалла. Шăлавар кăмăллакансен тӳрĕ касса çĕленине суйламалла.

Кĕске ураллă хĕрарăмсем çинче кĕлеткин çӳлти пайне ытларах палăртакан тумтир виçеллĕ курăнĕ. Çи-пуçăн пилĕкĕ çӳлте пулсан та аван. Çутă тĕслĕ блуза тăхăнмалла. Шăлаварпа юбкăна сарлака пиçиххипе çыхмалла. Кĕске жакетпа жилет та килĕшӳллĕ.

Кĕске хулăллă хĕрарăмсене манжетсăр, вăрăм, реглан çанăллă тумтир чухах. Кĕске çанăллă, хул пуççи çĕввине аяла антарса çĕленĕ кĕпесем – вĕсен валли мар.

Сарлака хул пуççине шаль евĕр çуха ансăрлатать. Тăрăхла рельеф, реглан çанă вĕсене илемлетет, анчах çанă пĕрмечесĕр пултăр.

Пысăк кăкăрлисемшĕн çӳлти пайне ансат çĕлетнĕ тумтир чухах. Çутă тĕслĕ юбка е шăлавар тăхăнăр, тӳррĕн касса çĕленĕ вăрăм жакетпа, блузăпа, шарфпа çӳрĕр.

Пĕчĕк кăкăрлисен çи-пуçăн çӳлти пайĕнче рюш, пĕрмечеллĕ кокетка пулни ытлашши мар. Çуха пысăк чухне те кĕлеткен çак çитменлĕхĕ палăрсах каймасть.

Пысăк хырăмлисене çăт тăракан çи-пуç килĕшмест. Вăрăм туника, жилет хырăма пытараççĕ. Çемçе пусмаран çĕлетнĕ жакет, ансăр юбка, тӳрĕ касса çĕлетнĕ шăлавар – кусем шăпах сире валли. Пысăк çухаллă, тăрăхла касса çĕлетнĕ блуза хырăма пытарĕç.

Кĕске мăйлисене водолазка тăхăнмалла мар. Çуха кăкăр тĕлĕнче уçă пултăр.

СĂНАНИНЧЕН

Утă, 6. Çак кунтан шыва кĕме тытăннă. Йăла тăрăх вĕттинчен пуçласа ватти таранччене çăвăннă, пĕвере е юхан шывра мар тăк – мунчара. Каçхине курăк пуçтарма тухнă, çак вăхăтра вăл уйрăмах сиплĕ шутланнă.

Утă, 7. Иван кунĕнче сывлăм вăйлă ӳксен – хăяр тулăх пуласса. Çĕрлехи тӳпере çалтăр нумай тăк – кăмпа йышлă тухĕ. Аслати авăтсан măйăр сахал ӳсет, вĕсем те пушă пулаççĕ.

Утă, 8. Петрпа Феврони хыççăн 40 кун шăрăх тăма пултарать. Çурçĕр сивĕ çилĕ çумăра хăвалать, уяр çанталăк илсе килет. Шăварнă хыççăнах йăран типсе кайсан – утă вăхăчĕ типĕ килĕ.

Утă, 9. Çĕр çырли пиçнĕ хыççăн сĕлĕ акма хушман. Çырла нумайăн – хаяр хĕле.

Утă,10. Çумăр çусан çичĕ эрнесĕр те чарăнмасть.

Утă,11. Çак кун хыççăн вĕлтĕрен сиплĕхне çухатать тенĕ, çамрăк хунавран яшка пĕçерсе юлма тăрăшнă. Вĕлтĕрен усал-тĕселтен сыхласса ĕненнĕ, ăна алăк янаххи, чартак, выльăх тăнă çĕре хурса тухнă.

Утă,12. Çумăр çусан тыр-пул ăнать. Петĕрпе Павăл кунĕ хыççăн шăпчăк тăватă кунран ытла юрласан хĕл Пукрав /юпан 14-мĕшĕ/ хыççăн тăватă эрнерен ларать.

ВĂТ, ТĔНЧЕ

Хĕртен арăм тăвайман

...Ял ĕçченĕсем уйра кăнтăрлахи апатра. Арçынсен – хăйсен ушкăнĕ, хĕрсем Лидя аппа тавра пухăннă та унăн халапне итлеççĕ. Вăл савнийĕпе епле пĕрлешнине калама тытăнчĕ.

«Пӳрт урайне кĕрслеттерсе ташлать туй халăхĕ. Каччă сумĕнче пуçа пĕксе, кĕç-вĕç йĕрсе ярасла ларатăп. «Хĕр ĕмĕрĕ иртсе кайрĕ-ши вара, юратман çынпа пурнăçа ирттерме тивĕ-ши? Ăçта çӳрет-ши, манăн хуйха пĕлет-ши Витали? Çичĕ ютра юлас килмест-çке...» – хытах хурлантăм эпĕ, хăтарма килекене кĕтсе алăк енне пăха-пăха илетĕп. Митюк мана тахçанах куç хывнă-мĕн. Çур çул каялла тусăм Маюк çак яла качча килнĕччĕ. Çавăн чухне хĕр çумĕ пулма тӳр килнĕччĕ. Туйрах вăрласа юласшăн пулнă вăл. Маюкăн упăшки ял яшĕсене хыттăнах асăрхаттарса хуни çăлса хăварчĕ: мана икĕ юлташĕ хытă сыхларĕç».

Лидяпа Витали пĕрлешме тахçанах шухăшланă-мĕн, анчах вĕсене ашшĕ-амăшĕ васкама хушман. Лидя та хăйĕнпе текех нимĕн те япăххи сиксе тухмасса шаннă. Чун варли пуррине Митюка уççăнах каланă-çке.

Çав кун Лидяна шăллĕ урлă улталаса урама чĕнсе кăларнă. Виçĕ вăйлă каччăна хĕр çĕнтереймен, хăй ирĕкĕсĕрех ăна лартса килнĕ.

«Хĕртен арăм тăватпăр...» – юрланă туй маткисем. Лидян чĕри картах сикнĕ. Вăл çавçавах тарса хăтăлас шухăшпа ларнă. Пике хурланнине сиснĕ пулин те Митюк пĕр ăшă сăмах та шарламан, кĕрекере мăнаçлăн саркаланса ларнă. Кĕçех çумри хӳхĕм хĕр яланлăхах унăн пуласса шаннă-тăр.

...Кĕçтенкки аппăшĕ çакнашкал лару-тăрăва лекнĕшĕн хăйне питĕ айăплă туйнă, ăна тăмсай вырăнне хуракансене тарăхнă. Аппăшне вăлах вăрлаттарса янă-çке. Çывăх тăванĕн шăпи – унăн аллинче. «Пулăшмаллах Лидяна», – тĕв тунă вăл. Тĕттĕмленсен Кĕçтенккипе Витали юлташĕсене пухса туй пыракан яла икĕ лавпа вĕçтернĕ. Пĕри урам вĕçне юлнă, тепри шăв-шав кĕрлекен çурт çывăхне çитсе чарăннă. Кĕçтенкки пӳрте хăюллăнах пырса кĕнĕ. Ăна сĕтел хушшинех лартнă. Вăл аппăшне пăхсан йăлтах ăнланнă – ку килтен тартмаллах хĕре. Лидя та çывăх çынна курсан ăшра хĕпĕртенĕ.

Туй арăмĕсем мăшăра кĕлете хупасси пирки шăрантарнă. Малалла мĕн пулса иртессине тавçăрнă Кĕçтенкки кил хушшинелле тухнă. Чăнах та, кĕлетре вырăн хатĕрленĕ. Туй арăмĕсенчен пĕри тӳшек айне вут сыппи хума кĕнĕ. Кĕçтенкки те, карттусне пусарах лартса, пуленкке йăтса кĕлете кĕрсе çухалнă. Пĕр кĕтессе михĕпе витĕнсе пытанса ларнă. Краççын çутипе ăна кунта асăрхама та çук.

Акă кĕçех мăшăра кĕлете питĕрсе илнĕ. Туй халăхĕ: «Хĕрĕхĕн кайрăмăр хĕр илме, хĕрĕх пĕррĕн пулса килтĕмĕр», – юрласа пӳртелле кĕнĕ. Çĕнĕ мăшăра кĕлетрен кăларсан çĕнĕ хăта ĕçки пуçламалла, çавна валли хатĕрленме тытăннă. Кĕçех Лидян тăванĕсем те килсе çитмелле-çке.

Кĕлет çывăхĕнче сыхă тăракан икĕ арçынна Витали куккăшĕ чĕнсе илнĕ те эрехпе хăналанма сĕннĕ. «Атьăр-ха, хăтасем, пӳрте кĕриччен кăштах сыпар», – чееленнĕ вăл, темĕн самантра алăка уçса яма ĕлкĕрнĕ, Кĕçтенкки те хăйĕн тивĕçне манман – шалтан уçнă. Митюка иккĕшех урлăпирлĕ çыхса пăрахнă. Çурма çарамасланнă каччă хирĕç тăрайман. Хĕре пахча хыçĕпе илсе тухса тарнă. Хытă юртакан лав çине вырнаçса ку ялтан самантрах тапса сикнĕ.

Витали савнине çав каçах килне илсе кĕнĕ. Ашшĕ-амăшĕ пил парса, ĕмĕр-ĕмĕр лайăх пурăнма ырă суннă. Çапла вара тул çутăлнă çĕре тепĕр çемье çуралнă.

Митюк та çын кулли пулас темен: Лидя çумне ларнă хăйсен ял хĕрне киле кăларса яман. Турă çырни унăн юнашарах çӳренĕ иккен. Вăл вара ют çĕрте çынсене пăлхатнă...

Çак çынсенчен халĕ Витали çеç пурăнать. Вăл ватă ĕнтĕ. Унăн хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем пур. «Çамрăкчĕ ун чух, хытă юратнă...» – тет вăл пулни-иртнине аса илсе, савнă мăшăрĕ çумра çуккишĕн ассăн сывласа.

Нина СТЕПАНОВА.
Йĕпреç районĕ.

ПУЛАТЬ ВĔТ!

Ют пахчари çимĕç

Пурнăçра çапла пулса тухасса Вова та, Лена та шухăшлама та пултарайман. Малтанласа кӳршĕсем пек çеç калаçкаларĕç вĕсем, каярах вара хутшăнусем шаларан та шала кĕме тытăнчĕç. Улах вырăн шыраса та хăшкăлмалла мар вĕсен. Арçын хуралçăра ĕçлет, икĕ кун урлă кашни каç ĕçе васкать. Çак самантпа усă курма тăрăшаççĕ те пĕр-пĕрне юратакансем. Хĕрарăм та, чеескер, мăшăрĕ çывăрса кайсанах ăшă йăвана вашлаттарать. Унта вĕсене никам та кансĕрлемест.

Мĕнлерех пуçланчĕ-ха çак хутшăну? Мĕн çитменрен ют пахчари çимĕçе тапăнчĕç çемьеллĕскерсем? Лена темиçе арçынпа та пурăнса курчĕ-ха. Малтанхи упăшки ырă пурнăç кăтартмарĕ. Ăна çеç мар, ачисене те патак çитерсех тăратчĕ. Ĕçкĕ пĕтерчĕ арçынна. Вăл эрехшĕн хăйĕн ывăлне мăйкăч тăхăнтартса çакса та хунăччĕ. Юрать-ха çав вăхăтра Лена ĕçрен килсе кĕрсе тĕпренчĕкне вилĕм аллинчен туртса кăларма май çитерчĕ. Çак пулăм та тĕрĕс çул çине тăратаймарĕ путсĕрскере. Хĕрарăм чăтаймарĕ, упăшкинчен уйрăлчĕ. Анчах пурнăçне майлаштарса ярас вырăнне хăй те аллине черкке енне тăсрĕ. Çавна пулах ăна ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарчĕç. Виçĕ шăпăрлана çывăх тăванĕ хăйĕн хӳттине илчĕ, пĕчĕкскерсем çемье ăшшине мăн аккăшĕ патĕнче тупрĕç. Ют çемьере ӳпкев сăмахĕсемсĕр пуçне ыррине илтеймерĕç ачасем. Вĕсем кашни кун амăшне кĕтрĕç, унăн хӳттине таврăнасси пирки ĕмĕтленсе пурăнчĕç. Асли шкултан вĕренсе тухсан мăн аккăшĕ патĕнчен тухса кайрĕç. Çак самантран хутшăнусем йĕркеленме пуçларĕç. Аслăрахисем хулара тĕпленчĕç. Кĕçĕн хĕрĕ амăшĕпе пĕрле пурăнма пуçларĕ.

Калама та пĕлмелле мар, миçемĕш упăшка Ленăн? Хальхи сусăр, пенси илсе тăрать. Çакă пурăнма пулăшать вĕсене.

Вовăн вара çемье тĕлĕшĕнчен йăлтах йĕркеллĕ темелле. Çумĕнче – савнă мăшăрĕ, юратнă икĕ ывăлĕ. Тата мĕн çитмест арçынна? Иртĕхни çеç мар-ши çакă? Юратуллă вăрттăн каçсем пирки ыттисем пĕлсен мĕнле пурнăç пуçланĕ-ши вĕсен?

Александр НИКОЛАЕВ.

АХ, АНЧАХ...

Хам капкăнах çаклантăм

Илĕртӳллĕ хĕрарăм яланах ăмсану, кĕвĕçӳ, вĕчĕрхенӳ çуратнă. Вăтам ĕмĕрсенче çунтарнă та иккен чиперккесене. Европăра инквизици вăхăтĕнче чиркӳ чи хитре пикесем шуйттан тарçисем пулнине ĕнентернĕ.

Чиперккесене вăрçмаллах-ши? Арçынсем хăйсене тытса чарайманнинче хĕрсен айăпĕ пур-ши? Каччăсем вĕт хитре чечек курнă сăпса пекех – тутанса пăхмасăр иртсе каясшăн мар. Ак пĕлĕшĕмех илес. Чăннипе, эпĕ ăна социаллă сетьсенче курсан тĕлĕнтĕм те. Унăн яланах вăхăт çук-çке. Анчах та хăй Любовь Ивановăн страничкине ирхине те, каçхине те, хăшпĕр чухне çĕрле те кĕрет. Маншăн вара кулăшла та çакă: ара, Любовь Иванова – шухăшласа кăларнă ят. Сăн ӳкерчĕкне те Интернетрах тупрăм. Ай, епле майра! Кĕскен, арçынсем курсан сĕлеки юхса анмалла. Сашук та чăтса тăрайман авă.

Социаллă сетьсенче эсĕ палламастăн, сана палламаççĕ – пĕрпĕрне тĕрлĕ ыйту пама та вăтанмалла мар. Çапла майпа чун савнине тĕрĕслесе пăхма шут тытрăмăр. Любовь Ивановăн страничкинчен Дима патне кĕтĕмĕр. "Сирĕн ятăр илемлĕ. Сăн-питĕрпе килĕшсе тăрать..." юптарăва çапларах пуçларăмăр. Хă, пăх-ха ăна, хуравларĕ. Килтен тухичченех пĕр-пĕрин патне çырса тăтăмăр. Шавлă ушкăн хыççăн эпĕ те каçхи клуба таплаттартăм. Анчах савăнасси пулмарĕ.

Хуçăлчăк кăмăлпа таврăнтăм киле. Тепĕр кунхине Димăна питĕнчен сурас килнине пытармастăп. Вăл шăнкăравласан та сиввĕн çеç калаçрăм. Вăл вара ним пулман пек тытать хăйне. Тен, ытти чухнехинчен хаваслăрах та. Ĕç хыççăн кĕтсе илме пулчĕ.

Вăл парнеленĕ çеçкесем те кăмăла çĕклеймерĕç ку хутĕнче. Хăйĕн куçĕ çиçет. Кафере ларнă чухне те ман çине пăхса илсе йăл кулкалать.

"Натюш, тен, эпир паян сан япалусене ман патне куçарма тытăнатпăр? Тахçанах планлатпăр-çке", – тенине илтсен вçо! вăйлă çулăм çинчи хуранри шыв пек вĕресе кайрăм. "Санпа-и, суеçĕпе-и?! Нихăçан та пурăнассăм çук!" – тесе сĕтел хушшинчен тăма хăтлантăм çеç, Дима ыталаса илчĕ те каялла лартрĕ. «Асăрха, Любовь Иванова хăй ман страничкăна кĕчĕ, эпĕ мар...» – тĕлĕннипе çăвара карса пăрахрăм та пуль. Ăçтан пĕлет?

Çав каç хаярри "пуçа кайнăскерсем" Любăн страничкинчен тухман та иккен. Тусăмăн йăмăкĕ аслă шкултан таврăнсан ман Димăпа "каласăва" малалла тăснă. Чун çунтармăшăм çакăнтан чăн сăн ӳкерчĕкне ыйтнă. Студентка туртклашса тăман аппăшĕн чăн ятне пĕлтернĕ. Тусăм страничкине кĕрсен пирĕн пĕрлехи сăн ӳкерчĕке асăрханă Дима. Пĕтĕм ыйту хуравĕ тупăннă та. Савниçĕм чипер хĕр хăй пĕрремĕш "сăмах пуçарни" ахальтен мар пулнине тӳрех тавçăрса илнĕ.

«Натюш, вăл санпа танлашаймасть паллах. Анчах сана текех каçсерен пĕччен хăвармастăп», – çапла вĕçленчĕ пирĕн "эксперимент". Ăна пула хĕр ирĕклĕхĕсĕр юлтăм. Анчах халĕ çумра – шанчăклăх.

Натюш МАРИНОВА.

ТАРĂХРĂМ

Кивçен илем

Чипер те çамрăк курăнас тесен темĕн тума та хатĕр çав эпир, хĕрарăмсем: пите тем те пĕр сĕретпĕр, пĕркеленчĕксене пĕтерекен крем туянатпăр... Акă пĕр кунхине илем парнелекенсем хăйсем шăнкăравларĕç. «Сирĕн ятпа сертификат выртать. Пирĕн пата косметика процедурине килмелле, йăлтах тӳлевсĕр, паспорт çеç пĕрле илĕр», – çепĕççĕн калаçать телефонпа пике. Кам мана çав териех парне тунă-ши? «Сире хисеплекен ырă çын», – тенипех çырлахтарчĕç. Э-э, кумах пулĕ-ха, унăн кăмăлĕ уçă, хула майрине çаврăннă та вĕçĕмех салона чупать. Вĕçĕмех çӳç сăрлать, паян хĕрлĕ вăл, ыран сарă... Хăнана килмессерен мана валли духи е ытти хатĕр-хĕтĕр илсе килет. «Илсе каятăп-ха сана пĕрре косметолог патне, унтан тухсан хăвна палласа та илеймĕн», – тенĕччĕ вăл. Тем тесен те вăлах мана савăнтарма шухăшланă.

Пĕр кунхине кăнтăрла хыççăн хулана тухса вĕçтертĕм. Садикре пĕрремĕш смена хыççăн пушаннăччĕ шăпах та. Палăртнă адреспа çитсе те тăтăм. Кăмăллă чиперуксем çавăтса тенĕ пекех пӳлĕме илсе кĕртрĕç. Чей сĕнеççĕ, ман тавра кускалаççă кăна, чаплă хăна тейĕн эпĕ кунта. Унтан кресло çине вырнаçтарчĕç, пите сĕрме, якатма тытăнчĕç. «Сирĕн ӳт ватăлма пуçланă, пĕркеленчĕксем тухассине чармаллах», – ăшшăн калаçать тухтăр тесе хăйĕнпе паллаштарнă хĕрарăм. Хăй илĕртӳллĕ, сăнĕпичĕ хӳхĕм. Унашкал курăнма эпĕ те хирĕç марччĕ те... «Хăвăрах ăнланатăр ĕнтĕ, пĕр процедурăпах ĕç пĕтмест. Кунсерен пăхмалла хăвăра. Пирĕн шăпах сире пулăшма пултаракан косметика пур», – ăнлантарать тухтăр. Унтан хайхи тĕлĕнтермĕш япалисемпе паллаштарма тытăнчĕ. Пĕри ӳте тасатать, тепри витаминпа пуянлатать-мĕн... Çулталăк ытла крем таврашĕ туянасси пирки нимĕн шухăшламасăрах пурăнмалла. Укçасăрах парса яратпăр тесен пушшех те кăмăлăм çаврăнчĕ. «Сирĕн çумра паспорт пур вĕт, кивçенле туянатăр. Хамăра валли укçа шеллер мар, арçынсем вăн мĕн чухлĕ ĕçсе-туртса тăкакланаççĕ. Тахçан та пĕрре хамăра савăнтармашкăн тивĕçлех эпир. Укçа вăл нихăçан та çитмест...» – ман çинчен каланăнах илтĕнчĕç тухтăр сăмахĕсем. Чăнах та, упăшкам кунне пĕр пачкăран кая мар сигарет туртать, çулталăкра 20 пин тенкĕрен те каçсах каять. Ĕçме тытăнсан вара укçа шыв пекех юхать... Çаксене аса илсен çилĕ капланчĕ, илем кӳренкен япаласене туянма килĕшрĕм. Салонти пикесем хыпалансах хут çырма тапратрĕç.

Яла пĕр чăматан косметикăпа пырса кĕтĕм. Ăçта хурас-ши ăна? Килте упăшкам асăрхĕ те ытлашши ыйтупа тăна илĕ. Кредит документне курсан гараж купалас шухăшпа пурăнаканскер пушшех те «урса» кайĕ. 50 пин тенкĕ çапах та! Ăна систерместĕрех шалуран уйăхсерен парăма тӳлесе тытма тĕв турăм. Чăматана садике кайса лартрăм. Тĕкĕр умĕнче чиперленсе ларнине манăн арçын юратсах каймасть, ĕçре кăна сăрланатăп.

Унтанпа виçĕ уйăх та иртрĕ ĕнтĕ. Сăн-питĕмре улшăну асăрхамарăм. Енчĕк кăна çӳхелет, укçа тенкĕ çитми пулчĕ. Упăшка мана шалăвне тыттармасть, унтан «кĕмĕл» ыйтма та аван мар. Чăматана шкапа пуçтарса хутăм, кашни кун пит-куçа сĕрме те алă çитмест. Тен, çавăнпах çамрăклатмастăпши?

Кайран хамăн айванлăхшăн ӳкĕнме тытăнтăм. Салонтисем чылай çын патне шăнкăравласа хăйсем патне чĕнеççĕ иккен, хаклă таварне кивçенле тыттарса яраççĕ. Ман пек çемçешке чун-чĕреллисем вĕсемшĕн шăпах шăл çемми. Эпĕ вара куммана кăлăхах тарăхса пурăнтăм.

Алина ИÇĔМПИ.

Нина НИКИНА

Амăшĕн чунĕ

Калав

/Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.

Вун пĕр класран аван вĕренсе тухса тăрех пĕр вăхăтрах икĕ университета кĕчĕ. Аван паллăсемпе ĕлкĕрсе пычĕ иккĕшĕнче те. Юрист тата экономист дипломĕсене алла илчĕ, ĕçе вырнаçрĕ. Савăнатчĕ Амăшĕ ачишĕн, сăпайлăхĕшĕн, ĕçченлĕхĕшĕн, таса чунлă, тăрĕ кăмăллă ăснĕшĕн хĕпĕртетчĕ. Камăн çулĕ урлă каçрĕ-ши ывăл?

Амăшĕн кăмăлне улăштарас тесех-ши çывăхри хурăн çинче темĕнле кайăк сасă пачĕ. Çанталăк иртенпех лăпкă. Çуркунне! Çутă тăпере пĕр пĕлĕт татки те курăнмасть. Хĕвеллĕ, çутă ырă кун чуна лăплантармалла пек, анчах та Амăшĕн чĕри çунать, куçĕ куççульпе тулнă.

Сак çине Амăшĕ çумне пĕр хĕрарăм пырса ларчĕ, аллинче – пысăках мар тулли хутаç. «Мĕн эсĕ шухăша путнă пек ларатăн? Санăн кунта кам?» – çине-çинех темиçе ыйту пачĕ хайхи. Хурава кĕтсе тăмарĕ, васкасах малалла калаçрĕ. «Манăн ывăл кунта ларать, тăватă çул пачĕç. Эрех ĕçсе, çаратса, ашкăнса çÿрерĕ те. Лартăр-ха, кăштах, канатăп! Тарăхтарса вĕлеретчĕ! Халĕ тата манран укçа ытларах ыйтса янă. Картла выляса ухмаха ерет пулмалла. Халĕ хăйне курса вăрçса хăваратăп та урăх килместĕп вара», – тарăхăвне пытараймарĕ хĕрарăм. «Кашнин хăйĕн шăпи тетпĕр те, пурнăç сукмакне хамăр та йĕрлетпĕр мар-и? Ачасем – пирĕн пуласлăх. Çуратса, çут тĕнче кăтартнипе кăна сахал, вĕсене тĕрĕслĕхе хăнăхтарса ÿстермелле. Ватлăхра вĕсен çине тайăнма май пултăр», – терĕ Амăшĕ. Вăл ăнланчĕ, ку хĕрарăмăн ывăлĕ амăшне лăпкă, телейлĕ ватлăх параймĕ. Ытла та хăрушă калаçрĕ ку хĕрарăм. «Ачасене ÿстерме, аслă пĕлÿ пама хальхи вăхăтра, паллах, çăмăл мар. Çапах йĕркеллĕ, лайăх çын тăвасси, ырă çулран пăрăнса каясран упрасси пирĕн, ашшĕ-амăшĕн, тĕп тĕллевĕ-çке.

Эсир вăхăтра асăрхайман ачăра, çавăнпа çамрăклах ĕçкĕпе ашкăнса кайнă. Эсĕ, амăшĕ, ачун йăнăшне пĕлетĕн. Калаçса пăхсам йĕркеллĕн – ăнланĕ. Халĕ вăл йывăрлăхра, нушара. Шухăшласа пăхĕ ывăлу та. Эсир те ăна пулăшма тăрăшăр, – Амăшĕ, хумханнипе, чĕтрекен аллине хăйĕн пысăк мар хутаççи айне пытарчĕ. – Манăн ывăлăм ун пек мар, çак çулталăкра темĕнле хăрушă çынпа та пĕрле пулма тиврĕ пулĕ, мĕн чухлĕ кулянса, макăрса хăйĕн сывлăхне, кăмăлне çунтарчĕ-ши?»

Палламан хĕрарăм хăма сак çинчен тăчĕ те урăх пĕр сăмах хушмасăр тĕрме картишне кĕрсе кайрĕ. Кĕтмен çĕртен халăха картишĕнчен хăвалама пуçларĕç. Пиллĕкĕн-улттăн тухса тăчĕç: пĕр аллинче – автомат, тепринпе сăнчăрланă нимĕç овчаркисене тытнă. Картиш формăллă çынсемпе тулчĕ. Хăвăртрах тухма ыйтса кăшкăраççĕ. Пурте тулалла тухса тăчĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, хупă пысăк машина тĕрме алăкĕ умнех кĕрлеттерсе, йĕри-тавра тусан хăварса, çитсе чарăнчĕ. Эх, пуçларĕç нимĕç овчаркисем сиксе вĕрме! Халех пурне те туртса çурма хатĕр. Тĕнче пĕтсе килчĕ тейĕн! Машинăн пĕр енчи алăкне уçрĕç. Умĕнчех пăруран çÿллĕ овчарка сиксе вĕрет. Машинăран тухакан çынна халех туртса çурассăн туйăнать. Пĕрерĕн чĕнсе кăларма тытăнчĕç. Анчах та малтан тухакан çамрăк çын хăраса çухалсах кайрĕ пулмалла. Хайхискерне те тапса, те туртса кăларчĕç те тĕрме алăкĕ патнелле тĕксе ячĕç, ун хыççăнах айăпласа суд тунă ытти çын пĕрин хыççăн тепри сиксе тухса алăк патнелле чупма пуçларĕç. Йĕри-тавра нимĕç овчаркисем сиксе вĕреççĕ. Амăшĕ çакна курса тăрса тĕлĕннипе ăсне мĕнле çухатмарĕ-ши? Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче тыткăна лекнĕ вырăс çыннисене нимĕç салтакĕсем мĕн таран нушалантарни, вĕсенчен кулни, йыттисемпе çынсене тулаттарнине кăтартнă киносем куçĕ умне тухса тăчĕç.

Ватă хĕрарăмăн чунĕ кÿтсе çитрĕ. Вăл каллех шухăшлавĕнче ывăлĕ патне таврăнчĕ. Шăрçаланса юхса тухнă куççульне шăла-шăла пăхса тăчĕ Амăшĕ. Шухăша путнăскер сисмерĕ те, таçтан çил килсе картишĕнчи тусана шăлма пуçларĕ. Çил вăйлансах пычĕ. Тĕрме хÿми çумĕнче ÿссе кайнă çÿллĕ хурăн çулçисем шăпăл-шăпăл калаçса пуç тайма пуçларĕç.

Айăпланнă çынсене пурне те тĕрмене шалалла кĕртсе пĕтерчĕç. Пысăк машина картишĕнчен тухса вĕçтерчĕ. Тĕрмен пушаннă картишĕнчи шăплăха йывăçсем те хăраса, те савăнса кашлама тытăнни çавăрса илчĕ. Хура та тĕксĕм пĕлĕтсем вĕçнĕ пек васкаса каялла картишне кĕнĕ халăхăн пуçĕ çийĕн капланчĕç. Çиçĕм çиçрĕ, аслати кĕмсĕртетрĕ. Халăх васкасах тĕрме картишĕнчи пÿлĕме капланчĕ. Амăшĕ урамра пĕчченех тăрса юлчĕ. Хăратмарĕ ăна кĕрлесе авăтакан аслати те, вăйлă çил-тăвăл çĕкленсе хăпарни те, вăхăтăнвăхăтăн çиçĕм ялкăшса тÿпене пайлани те. Унăн пуçĕнче çаплах шухăшсем пăтранчĕç. «Мĕншĕн çак тискерлĕхе курма тÿр килчĕ-ши? Тата мĕн чăтса ирттерĕп-ши ватă пуçампа? – айланчĕ вăл. – Чăнах та, этем пĕр такăнмасăр пурăнса ирттерме пултарать-ши? Хăшĕ-пĕри мĕн ачаран ырă курса, савăнса ирттерет ĕмĕре. Манăн пурнăçра мĕн кăна пулса иртмерĕ-ши? Эх, шăпам-ăраскалăм, мĕнле кăна силлемерĕн-ши мана? Вăрçă, сивĕ пÿрт, выçлăх, çĕтĕк-çурăк, тăлăх пурнăç... Тăванăмсене ÿстерсе çын тăвасси, йĕркеллĕ пурнăç çулĕ çине тăратасси пĕтĕмпех манăн çамрăк пуçăм çине тиенчĕ. Халĕ хамăн ача...» – шухăш вĕçне тухаймарĕ Амăшĕ. Хăйне пĕр хĕрарăм пырса тĕксен шартах сикрĕ. «Эсир питĕ шухăша путнă, ан çилленĕр эпĕ сире чăрмантарнăшăн», – терĕ хĕрарăм. Вăл темĕн ыйтасшăн пулнине Амăшĕ ăнланса илчĕ. Анчах та шултра тумламсем ÿкме пуçларĕç. Унччен те пулмарĕ, шалкăм çумăр çума пуçларĕ. Икĕ чăваш хĕрарăмĕ васкасах пысăк çуртăн пÿлĕмне кĕрсе тăчĕç.

Кунта халăх тăп-тулли, анчах та никам та çук пекех – шăп. Нумай та вăхăт иртмерĕ, çынсем саланма пуçларĕç. Вăйлă çил-тăвăл çумăр пĕлĕчĕсене мĕнле хăвăрт илсе килчĕ – çавăн пекех сасартăках таçта аякка хăваласа кайрĕ. Çумăр çума чарăнчĕ. Халăх та ытлашши нумай юлмарĕ. Пĕрисем – кунта ларакан тăванĕсемпе тĕл пулма, хăшĕсем апат-çимĕç парса хăварса саланчĕç. Амăшĕ кăна, вырăн тупаймасăр, ывăлне илсе тухасса чĕререн кĕтрĕ. Унпа калаçакан хĕрарăм та ывăлне апат-çимĕç пама килнĕ. Чунне кăштах та пулин уçăлтарас кăмăлпа-ши, Амăшĕпе калаçать те калаçать. Чĕри çунать пулас. «Эпĕ Люба ятлă, – терĕ хăйĕнпе паллаштарса. – Сирĕн паян савăнăç. Сирĕншĕн эпĕ те савăнатăп. Ман ывăлăм та тĕрмене пĕр усал ĕç тумасăрах çакланчĕ. Тĕрĕс суд тунă тăк хупмалла марччĕ те... Каçхине ман ывăл юлташĕпе тата хĕрсемпе клуба кайнăччĕ. Музыка кĕрленĕ, çамрăксем ташланă вăхăтра унта йĕркелĕх хуралçисем кĕнĕ. Ĕç хыççăн сыпкаланă курăнать хăйсем. Ман ывăл ташлакаланă, çаврăнса илнĕ чухне асăрхамасăр пĕрин ури çине пуснă. Ывăла çапса, тĕксе янă. Унтан темиçен урама сĕтĕрсе тухса питĕ хытă хĕненĕ. Юлташне иккĕн икĕ енчен тытса тăнă, вăл нимĕнпе те пулăшайман. Ывăлăм пĕччен, лешсем вун виççĕн. Пĕри кĕсйинчен çĕçĕ туртса кăларнă. Ман ача çĕççине çара алăпах çавăрса тытнă. Йăлт кассаюнланса пĕтсен те туртса илме паман. Çапах çапса антарнă ăна. Ÿкнĕ чухне ман ачан аллинчи çĕçĕ тапăнакансенчен пĕрин аллине çурса янă... Виçĕ-тăватă уйăх кăтартмарĕç ывăла. Амантса пĕтернĕ, кăкăр шăммисене хуçнăскерне изолятора кайса пăрахнă. Ачана аран-аран шыраса тупрăм. Ăçта хупса хунине те, унпа мĕн пулса иртнине те каламаççĕ. «Суд пулсан пĕлĕр», – терĕç кăна. Адвокат тытрăм та, ун урлă кăна уçăмланчĕ лару-тăру. Тăватă уйăхран кăна тĕл пултарчĕç ывăлпа. Тăватă çуллăх хупрĕç». Ку хĕрарăма Амăшĕ чĕререн хĕрхенчĕ. Хуйăхпа тулнă икĕ чăваш хĕрарăмĕн чĕри пĕр-пĕринче ăшăлăх шырарĕç-ши – сăмахларĕç те сăмахларĕç. «Хальхи вăхăтра хуллен-майĕпен, сăпайлăн пурăнма юрамастех. Кĕрешмелле тĕрĕс марлăхпа!» – терĕ Амăшĕ тарăхсах. Тахçан курнă хăрушă тĕлĕк пек туйăнать пурнăçра пулса иртни.

«Ман ывăл та ултава пулах çакланчĕ çакăнта. Карьерăпа улăхас, чапа тухас ĕмĕтпе темĕн те шухăшласа кăлараççĕ иккен. Паянхи пурнăçра çÿллĕ вырăнти куккасăр тĕрĕслĕх тупма та çук. Хăвăн вăюпа, хастарлăхупа, ăсупа тĕрĕслĕхе шырама пуçласан... Укçа, укçа пуç пулса тăчĕ. Укçашăн темĕн те тума пултараççĕ, айăпсăр айăпларçĕ, пысăк айăпа кĕнисене туртса кăлараççĕ. Çакăнпа кĕрешме питĕ йывăр», – сăмахларĕ Амăшĕ. «Савăнăр, ывăлăр паян сирĕнпе пĕрле пулать, эпĕ çакăн пек куна хăçан кĕтсе илем-ши, хăçан ывăлăма çак тĕрме алăкĕнчен тухнине курса чупса пырса ыталам-ши?» – терĕ чăваш хĕрарăмĕ юхакан куççульне шăла-шăла илсе.

/Вĕçĕ пулать/.

САВĂ СĔВЕМĔ

Николай ТЕВЕТКЕЛ

Кăчкăсăр турат

Сăнарлăх çук. Чунпа тÿсмен ку автор.
Калас сăмахăн енчĕкĕ пушах.
Туртман нуша урапине – туятпăр:
çырать хăй. Хăй валли шырать нуша.

Апла пулин те кĕвĕçÿн сăр хурчĕ
ун чĕлхипе нăйăлтатать – ай-тур!
Çыртать шăлне: кÿлешрĕ, чупрĕ, урчĕ –
çырулăхра пуласшăн вăл маттур.

Сăнарлă шухăш сăвăçне ăмсанчĕ
вăл пултарулăх ăшшине сиссе.
Ют мимесен вăрттăнлăхне ăмсанчĕ
пуш хир пек пуш пуçне кăшт
нÿрлетсе.

Вăл хăйĕн çуклăхне ют мимепе
пĕрех «пур!» тесшĕн чапланас хĕмпе.

Вячеслав МИХАЙЛОВ

Мухтав сана, тăван театр

Чăваш çамрăксен театрне

Хапăлласах кĕтсе илетĕн
Театра çÿрекене.
Киленÿпе хавас пиллетĕн
Асамласа хăнасене.

Хушса юрламалли:

Мухтав сана, тăван театр,
Сăваплă ĕçшĕн чыс та тав.
Хĕвел шевли пекех çутаттăр
Куракана кашни выляв.

Артист тени чунпа хăватлă,
Илемлĕхпе, ăспа пуян.
Ĕмĕтсемпе вĕри, çунатлă
Хăй тивĕçне хакланăран.

Театра сумлах чысланă
Мухтавлă Çеçпĕл ячĕпе.
Кăвар чĕри ялан вăй панă,
Ĕçлетĕр ун хăвачĕпе.

Элĕк районĕ.

ПĔЧĔККИСЕНЕ

Светлана НИКИТИНА

Маруç

«Ыратать паян ман пуç
/Сывăччĕ ĕнер Маруç/,
Каяймастăп пуль шкула
Çак усал чире пула...»
Тăххăр çитрĕ, вăл выртать,
Амăш уншăн хуйхăрать:
«Тăр-ха, хĕрĕм, ĕç эмел,
Тухтăра кайса чĕнем».
«Кирлĕ мар, анне, хамах
Чĕрĕлетĕп пуль, çапах
Эмелне пăхам ĕçсе,
Тухтăртан хăратăп пит,
Ун йĕппи те вĕт пĕр шит», –
Ăшĕнче вăл шухăшлать,
Амăшне хăй улталать.
Чирлемен Маруç пачах!
Наян пуснă – çав анчах.
Ăшă вырăнĕ çинчен
Тăрасси килмест иккен.

Сирĕн хушăра, туссем,
Çук-и унашкаллисем?
Патăрьел районĕ.

Миледи пулмасан та

амăшĕ ывăлĕшĕн паян та хитре

– Маргарита Терехова ывăлĕн ашшĕсен кандидачĕсен хушшинче Игорь Тальковпа Андрей Тарковский ячĕсем те пур, – каласа кăтартать актрисăн ывăлĕ. – Манăн вара анне – Актриса. Тĕлĕнмелле илĕртӳллĕ хĕрарăм. Чăн та, çакна эпĕ ӳсерехпе кăна ăнланакан пултăм. Унăн çуралнă кунĕ тĕлне ролик кăларас ĕмĕт пурччĕ те, анне выляна фильмсене тепĕр хут пăхса тухрăм. Турăçăм! Мĕнле кăна арçын çук ун çумĕнче! Игорь Костолевский, Валентин Гафт, Александр Кайдановский, Владимир Высоцкий, Станислав Любшин, Армен Джигарханян, Эммануил Виторган, Олег Даль, Михаил Боярский, Николай Караченцев, Лев Дуров, Александр Калягин! Аннен фильмографийĕ мĕн тери пуян...

Ача чухне вăл маншăн ахаль анне кăна пулнă-ха. Ачалăхран асра юлнă: хыр йĕпписем, турат хушшинчен курăнакан, хĕвел питтинче вылянакан тинĕс... Эпир темĕнле пансионатра. Пирĕн балкон çине йĕкел патне пакша килетчĕ. Пăчă мар. Акă эпир тинĕс хĕрринче. Анне мана хăйăр çине лартать те хăй айккинелле кайса аллине тăсать: “Кил, кил кунта”. Эпĕ хăратăп, анчах та анне чĕнет. Акă эпĕ пĕр утăм тăватăп, тепре... Ура ыратать... Мĕн пĕчĕкрен анне мана пĕрле илсе çӳретчĕ. Канма кăна мар, кино ӳкернĕ çĕре те.

Ача чухне мана ялан хăрушă тĕлĕк асаплантаратчĕ. Каллех анне кăна лăплантарма пултаратчĕ. Чупса пыратчĕ те ыталаса илетчĕ. Эпĕ тӳрех лăпкăлăх авăрне путаттăм.

Пĕлместĕп, лайăх-и ку е начар-и, анчах та анне мана темĕн тума та ирĕк панă. Килти библиотекăран кирек хăш кĕнекене илсе вулама пултарнă эпĕ. Мĕнле кино курнине те тĕрĕслемен вăл. Паллах, пур кĕнекене те ăнланма пултарайман ача ăсĕпе. Анчах та унта мĕн çырнине “çăтаттăм”, шухăшлавра вара сăнарсем çуралатчĕç. Çакна хамран кăлармалла вĕт-ха – çапла ӳкерме пуçларăм. Анне каллех мана хавхалантаратчĕ. Вăл вăхăтри дефицита пăхмасăр ман валли таçтан хутсемпе сăрă тупатчĕ.

Кĕнекесемпе сăрă хыççăн мана кино ярса илчĕ. Малтанах ку туртăм видеосалонпа çыхăннăччĕ. Унта, вырăн çитменнипе, тăрса та курма юратчĕ. Çакăн хыççăн пирĕн килте видеомагнитофон тупăнчĕ.

Эпир çуран çӳреме юрататтăмăр. Анне машина рулĕ умне нихăçан та ларман. Хула тăрăх çуран çӳретчĕ. Метрона анатчĕ. Аппа, пачах тепĕр май, машина çӳретме ирех вĕренчĕ. Эпĕ аннепе пĕрле Мускав тăрăх утма пултараттăм-ха. Вăт метро вара... Çынсен мăйĕсем, пирĕн енне пăхнине пула, пăрăнсах ларатчĕç ахăр. Анне хăйне ним пулман-асăрхаман пек тытма тăрăшатчĕ-ха, анчах унăн та чăтăмĕ пĕтетчĕ. Кам та пулин хăй çинчен куç илменнине асăрхасан тепĕр чух куç харшине пĕретчĕ хирĕç: “Ну, мĕн пăхатăн-ха?” Кĕтесе хупнă чĕр чун пек хăйне камăн туяс килтĕр? Пĕр вăхăтран эпĕ аннепе метрона анми пултăм. Сăлтавне хăй те ăнланатчĕ...

Паллах, “Собака на сене” тата ”Д’Артаньян и три мушкетера” хыççăн анне чапĕ вăйланчĕ кăна. Телее, эпĕ çак вăхăта лекмен. Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш çулĕсенче пирĕн подъездпа хваттер алăкĕ умĕнче мĕн пулса иртни пирки шухăшлама та хăрушă. Ун хыççăн вун-вун çул иртсен те “хуралçăсем” çухалманччĕ те унтан. Анне вĕсене кукăльпе хăналатчĕ, килĕсене хăвалатчĕ. Пĕр арçын, ас тăватăп, алăк куçĕнчен шалалла пăхса пĕр чарăнми сăнатчĕ. Эпĕ кĕтессе хĕсĕнсе ларса макăраттăм. Анне мĕн чухлĕ вăрçман пулĕ ăна. Усси пулманнине кура пĕррехинче вăл тытрĕ те алăка уçса çав арçынна сивĕ шывпа сапрĕ. Çакăн хыççăн кăна çухалчĕ вăл.

Ача чухне мана анне тăтăшах Моссовет театрне репетицисене илсе çӳретчĕ. Вăл сцена çинче чухне эпĕ ытти актерсен ачисемпе пĕрле путвал, мачча тăрăх чупаттăм. Пĕррехинче анне Федерико Гарсиа Лорка “Когда пройдет пять лет” пьеси тăрăх хăй спектакль лартма шухăшларĕ. Сакăр вуннăмĕш çулсен пуçламăшĕнче Игорь Тальковпа пĕрле вăл “Балаганчик” коллектив йĕркеленĕччĕ. Çак пьесăн пĕр пайне анне çавăнта вулатчĕ. Унăн спектаклĕнче мана, 12 тултарнăскерне, арçын ача ролĕ тивĕçрĕ, Кушака манăн ачалăхри тусăм, театр директорĕн Валентина Тихоновнăн хĕрĕ Женя Панфилова сăнарлатчĕ /халĕ вăл – чаплă художник/.

Анне роль сĕнсен эпĕ савăнсах йышăнтăм-ха. Хама мĕн кĕтнине пĕлнĕ пулсан-и? Сцена çине тухас умĕн кĕрхи çулçă пек чĕтреме ереттĕм: ală-урана тăм тивнĕ тейĕн, шăпăр-шăпăр тар юхать, ĕçес те, çиес те килет, кайран тăн çухатса выртас шухăш ярса илет – йăлт хăвăртрах вĕçлентĕр кăна. Çитменнине çапла – кашни хутĕнчех...

Анне паллă артистка пулнине эпĕ калама юратмастăм. Пĕррехинче лагере канма кайсан та ертӳçĕсенчен çакна пытарма ыйтрăм: эпĕ “шăп çав Маргарита Терехова” ывăлĕ пулнине никам та ан пĕлтĕр – манăн ыттисенчен нимĕнпе те палăрса тăрас килместчĕ.

Çапла, анне хушамачĕпе çӳретĕп эпĕ. Аппа Аня та. Апла тăк арçынсенчен анне хăватлăрах пулнă – вĕсен хушамачĕсем çĕнтереймен.

2005 çулта анне “Чайка” фильм ӳкерчĕ. Эпĕ Треплев сăнарне Тураев хушаматпа калăпларăм. Анне çапла тĕв турĕ – пĕр фильмра Тереховсем ытла нумай пулассинчен шикленчĕ, ахăр, вăл. Тен, кунта темĕнле стратеги те пулнă – паян та пĕлместĕп. Журналистсем, чăн та, тӳрех чалтах сикрĕç. Хушамат, атте пирки ыйта-ыйта халтан ячĕç. Эпĕ вара ун пирки хам та нумай пĕлместĕп. Сайфиддин Тураев ятлă, иртнĕ ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулĕсенче Таджикистанра трикотаж пĕр пысăк фабрикине ертсе пынă. Аннепе иккĕшĕ “Таджикфильмра” “Кто поедет в Трускавец?” фильма ӳкернĕ чух паллашнă. Мускав артисчĕсене аван кĕтсе илнĕ унта. Анчах та аттепе анне хутшăнăвĕсенче шурă пăнчă нумай...

Журналистсем Тураева çапах та шыраса тупнă-мĕн, анчах та вăл Мускаври ывăлĕ пирки калаçма килĕшмен. Интервьюра Тураев авланнине, унăн ултă ача ӳснине пĕлтернĕ. Вăл аван карьера тунă, Таджикистан президенчĕн пуканĕшĕн те кĕрешнĕ. Темиçе çул каялла хам ăна шыраса пăхрăм. Телефон номерне те хăвартăм. Вăл шăнкăравламарĕ...

Тураев манпа кăсăкланмасть те пулсан Георгий Гаврилов режиссер, пачах тепĕр май, мана хăйĕн ывăлĕ тесех йышăнать. Ачалăхран çакă асра юлнă. Ăна, пирĕн пата пысăк хутаçпа тата чечек çыххипе килнĕскерне, анне киле те кĕртмерĕ. Вĕсем пĕрле пурăннă, каярахпа темĕнле сăлтава пула уйрăлнă. Гера ман çине юратса пăхнине паянхи пек ас тăватăп. Анчах анне мана унпа хутшăнма чаратчĕ.

Эпир унпа икĕ çул каялла тĕл пултăмăр. Мана “Петрович” фильма хутшăнма чĕнчĕç. Эпĕ тĕлĕнтĕм – Чечняра хĕсметре пулнă каччă сăнарĕ пĕрре те ман валли марччĕ. Каярахпа палăрчĕ – режиссерĕ Гера иккен. Эпĕ ӳснĕччĕ ĕнтĕ, кампа хутшăнмаллине анне хушнине пăхмасăрах палăртаттăм. Гера манпа калаçнă май ачалăха аса илчĕ... Халĕ эпир унпа йĕркеллех хутшăнатпăр. Анчах та ”атте” темешкĕн çапах та чĕлхем çаврăнмасть...

Игорь Тальковăн ывăлĕ аннене халалланă концерта хутшăнчĕ. Ăна Аньăпа унăн юлташĕ Слава Стародубцев парне вырăнне хатĕрлерĕç. Концерт питĕ аван иртрĕ. Аннене саламлама Боярский, Виктюк, Смехов килчĕç. Игорь Тальковкĕçĕнни – вăл вара сывăх çыннине кассах илнĕ тейĕн: сăнĕпе те, сассипе те! – ашшĕ аннене халалланă юрра юрларĕ...

Маргарита Терехова актриса çинчен темĕн те илтнĕ эпĕ: йывăр, вĕри кăмăллă, унпа пĕр чĕлхе тупма çăмăл мар. Тĕрĕсех-тĕр ку. Унран пурне те лекетчĕ: режиссерсене те, партнерсене те. Хăйĕн хакне пĕлетчĕ вăл. Андрей Тарковский ун пирки “ахаль гений” тетчĕ.

Пире те тепĕр чух вактĕвекшĕнех çакланатчĕ унран. Çав вăхăтрах пысăкрах айăпа кĕнĕшĕн те нимĕн те каламастчĕ. Куçăм тапхăрĕнче уйрăмах асăрхануллăччĕ анне манпа: тепĕр чух сыпкаласа килсен те кулса кăна илетчĕ те... хывăнтарса çывăрма выртаратчĕ. Аннен демократла воспитанийĕ хăйĕн ĕçне турĕ: усал ушкăнпа та çыхланса каймарăм эпĕ, халĕ те газон тăрăх утаймастăп, урамра çӳпçап ятарлă вырăна кăна пăрахатăп... Пулăшу кирлĕ çын патĕнчен те куçа хупса иртейместĕп. Анне те çавах. Пĕррехинче вăл урамра ачине сĕтĕрсе пыракан хĕрарăма курнă. Хĕр ача кăшкăрса макăрнă, хĕрарăм турткаланине кура унăн алли мăкăлтанса тухас пекех курăннă. Анне урам урлă чупса каçнă, ачана ярса илсе çупăрланă. Хайхискер унăн çумне тĕршĕнсе макăрма чарăннă. Хĕрарăм анне çине куçне-пуçне чарса пăрахса пăхнă – Маргарита Тереховах-и ку? Ачи енне аллине тăснă – лешĕ каллех анне çумне тĕршĕннĕ. “Эпĕ сире ачăра паратăп, – тенĕ анне, – енчен те ăна текех кӳрентермессе шантаратăр тăк”. Хĕрарăм килĕшсе пуçне кăна сулнă: “Нихăçан та кăшкăрмăп”.

Анне чапшăн, мулшăн нихăçан та çунман. Хитре тăхăнма кăмăллатчĕ, паллах, актриса вĕт-ха. Вăл чăнласах искусство тата интереслĕ, ăслă, пултаруллă çынсем патне туртăнатчĕ.

Пĕчĕк чух эпĕ тăтăшах чирлеттĕм, анне яланах юнашарччĕ. Çав вăхăтра вăл концерчĕсене куçарнине, спектаклĕсенче ыттисемпе ылмашăнине эпĕ халĕ кăна ăнланатăп. Эмелсĕр пуçне халăх меслечĕпе те сиплетчĕ.

Хăна килес умĕн пирĕн сивĕтмĕшрен йăлт сĕтел çине вĕçетчĕ. Анне касатчĕ, туратчĕ... Вăл пĕр-пĕр рецептпа усă курнине нихăçан та ас тумастăп эпĕ, ялан йăлт çĕнĕрен те çĕнĕ апат-çимĕç янтăлатчĕ, йăлт хăй шухăшласа кăларатчĕ.

Анне ыйткалакан умĕнчен нимĕн пулман пек иртсе кайнине те ас тумастăп. Çитменнине, вак укçа шыраса тăмастчĕ вăл, аллине мĕн лекет – çавна паратчĕ. Пин тенкĕлĕххи тĕк – пин тенкĕлĕххи. Юлашки укçине те шеллеместчĕ. “Эпĕ татах ĕçлесе илетĕп”, – тетчĕ.

Анне эпĕ çураличченех турра ĕненме пуçланă. Тĕн йĕркине çирĕп пăхăнатчĕ. Чиркĕве мана та тăтăшах илсе каятчĕ вăл.

Мана анне час çуратман. Кун пек ачана ытларах парса ĕлкĕрес килет. Çавăнпах мана темĕн тума та ирĕк панă вăл, чарман. Аслă классенче вĕреннĕ чухне, хам кино енне туртăннине пăхмасăрах, архитектор пулма хатĕрленеттĕм. Документсене вара... ВГИКа патăм. Аннене каларăм: “Тархасшăн, никам патне те ан шăнкăравла, хамах...” Вĕренме илнисен списокĕнче хамăн хушамата курсан тĕлĕнтĕм те. Кафедра ертӳçи Алексей Баталов: “Терехов... Терехов... Маргарита Тереховăпа пĕр хушаматлă кăна-и?” – тесе ыйтрĕ ыттисенчен. Апла тăк, анне сăмахне тытнă.

Анчах та иккĕмĕш курсран пăрахрăм ВГИКран. Актера вĕренме çăмăл мар – тĕллеве çирĕппĕн палăртмалла. Манăн вара вăл пулман. Анне çакăн çинчен каярахпа кăна пĕлчĕ. “Ку – санăн пурнăçу”, – терĕ кăна.

Эпĕ аннепе нумай пурăнтăм. Каярахпа хваттер тара илтĕм. Пирĕн хушăра нимĕнле пысăк хирĕçӳ те пулман. Кирек камăн та уйрăм пурăнса курас килет – çавă кăна. Анне патне вĕçĕмех юлташсене мĕнле илсе пырас-ха? Пушшех те – хĕре. Çапах та МИХсем çакăнтан та шăв-шав çĕклерĕç. Анне пĕррехинче эпĕ ВГИКран кайнăшăн пăшăрханса калаçнă. Юлашки вăхăтра эпир унпа пит çывăхах маррине те пытарман. Чăн та, эпир кăшт хирĕçсе илнĕччĕ. Кун пекки такамăн та пулать. Пĕр-икĕ кунран мирлешрĕмĕр. Интервью вара паян та Интернетра “çӳрет”.

Хаçатсем аннен ăс-тăнĕ чакни пирки те çыраççĕ. Çапла, пĕррехинче вăл Мускав варринчех çухалса кайнă. Çĕнĕ сквереом, çĕнĕлле сăрланă çуртсем... Анне иртен-çӳрене хăйне килне ăсатма ыйтнă. Ватă çынпа темĕн те пулать вĕт. Анчах та ку анне пачах та хевтесĕр иккенне пĕлтермест. Эпир, ачисем, ăна пачах та манăça кăларнă тени те чăнлăхпа килĕшсе тăмасть. Хам тĕлĕшпе юрĕ-ха, анне патне тăтăшах çӳретĕп пулин те – чăтса ирттерĕп. Аньăшăн вара, чăн та, кӳренмелле. Кăшт пушă вăхăт тупăнсанах анне патне чупать вăл. Ну, ватăлать çывăх çыннăмăр – мĕн тăвас-ха? Пĕрисем 100 çулта та сăвă калама пултараççĕ, пурте апла мар-çке. Çут çанталăка хирĕç каяймăн...

Вăл пластика пĕр операцийĕ те туман. Хитрелĕхĕпе ĕçре кăна усă куратчĕ. Нихăçан та ытлашши сăрланман вăл – ĕçре кăна. Ахаль чух пит çăмартине кăшт хĕретме пултаратчĕ тата тутине. Анне, халĕ унра Миледие палласа илеймесессĕн те, маншăн паян та хитре.

/“Караван историй”/.





И-ХИ-ХИК

– Чунăм, мансăр тăрса юласран хăраса курнă-и эсĕ хăçан та пулин?

– Паллах. Пĕррехинче эпир санпа вокзала кайнăччĕ – автобуспа çула тухма. Эсĕ манран хăвăртрах утса кайрăн та эпĕ тăрса юлтăм. Укçа вара санраччĕ...

* * *

– Пирĕн пуçлăх ĕçрен каяссăн курăнать.

– Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн?

– Ĕнер мана чĕнсе илчĕ те: "Петрова, эпир санпа текех пĕрле ĕçлейместпĕр пулĕ", – терĕ.

* * *

Юристсен сайтĕнче ыйту вырнаçтарнă: "Бюллетень илнĕ çынна, каярахпа хĕвелпе пиçĕхсе хăп-хăмăр пулнăскерне, ĕçрен хăтарма юрать-и?"

* * *

Тӳлевсĕр реклама: эсир заводра ĕçлекенсене çур çул шалу тӳлеместĕр, сире каярахпа тепĕр çур çул телекурав кăтартать.

* * *

Идеал шайĕнчи çын пулмасть тетĕр-и? Ĕçе вырнаçма пынă кандидатăн анкетине пăхăр-ха...

* * *

Ĕçе кая юлса çитни пуçлăха ăнлантарса çырнинчен: "Ĕнер эпĕ, чăн та, 10 сехетре кăна çитрĕм кантура, мĕншĕн тесен 8-та килекенсем чей кăна ĕçеççĕ 10-ччен. Эпĕ вара ун чухлĕ ĕçейместĕп".

* * *

Пирĕн коллективра пуçлăха хушу пама пултаракан çын та пур. "Тух-ха пӳлĕмрен!" – теме те пултарать вăл. Ку – тирпейлӳçĕ.

* * *

"Уяв умĕн хавхалантармаллах ĕçлекене!" – пĕтĕмлетет пуçлăх хăйне тем пысăкăш преми парасси çинчен хушăва алă пуснă май.

* * *

Икĕ строитель калаçăвĕнчен.

– Маçтăр сана ĕçрен мĕншĕн кăларса ячĕ вара?

– Пĕлетĕн-и: маçтăр вăл – хăй нимĕн те тумасăр ыттисене кăна сăнаса çӳрекен.

– Кам пĕлмест пулĕ кăна? Çапах та сана мĕн сăлтавпа кăларса ячĕ вăл?

– Кĕвĕçнипе. Пурте маçтăр эпĕ тесе шухăшланă иккен.

* * *

Çар комиссариачĕ. Окулист пӳлĕмĕ.

– Виççĕн кĕрĕр. Так, пĕрремĕш, хуравлăр! Çӳлти йĕркине куратăн-и?

– Куратăп.

– Аялтине...

– Куратăп.

– Маттур! Снайпер пулăн! Иккĕмĕш! Çӳлтине куратăн-и?

– Куратăп пек...

– Аялтине вара...

– Çук, курмастăп.

– Вăт, суккăр! Штаба ярас! Виççĕмĕш! Çӳлти йĕркине куратăн-и?

– Çук, курмастăп!

– Вăт, маттур! Ну, чее те вара эсĕ. Разведкăна кайăн!

* * *

Арăмĕ упăшки патне шăнкăравлать:

– Эсĕ машинăри навигатора тĕкĕннĕ-и?

– Çапла. Ярославле çитмешкĕн миçе çухрăм пулнипе кăсăкланнăччĕ.

– Ну, тавах сана, чунăм. Эпĕ халĕ Ярославльте.

* * *

Арăмĕ – упăшкине:

– Йытта сутмалла тесе шухăшлатăп.

– Мĕншĕн?

– Эпĕ юрлама тытăнсанах тӳрех уласа ярать.

– Ну-у... Эсĕ хăв малтан пуçлатăн вĕт-ха.

* * *

Ресторанра.

– Мадам, сирĕн упăшкăр мĕншĕн сĕтел айне кĕрсе ларчĕ?

– Ку упăшка мар çав, упăшка авă – халĕ кăна кĕчĕ.

* * *

Куççульпе çăвăнакан арăмĕ – упăшкине:

– Эпĕ мĕн сăлтавпа макăрни сана кăсăклантармасть те-им?

– Пачах та. Ун чухлĕ укçа пур пĕрех çук манăн.

* * *

Арçын меллĕн кăна çемçе кресло çине вырнаçса ларать:

– Ну, мăшăрăм, мĕн каламаллине каласа юл – футбол сезонĕ пуçланать.

* * *

Арăмĕ – упăшкине:

– Апат – сĕтел çинче...

– Мĕн, турилккене хураймарăн-им? – вĕчĕрхенет арçын.

* * *

– Анне, санăн пĕчĕк ача пулас килет-и? – ыйтать пĕчĕк Вовочка çемье сĕтел хушшине каçхи апата вырнаçнă май.

– Паллах, пулас килет, – хуравлать амăшĕ. – Мĕн тери аван вĕт-ха: садике çӳрĕп, манăн нумай тетте пулĕ, сан пекех ашкăнăп, юнтарăп.

– Манăн вара хăвăртрах ӳссе çитес килет, – палăртать Вовочка.

– Юрать, – килĕшет амăшĕ. – Ман пекех тăрмашăн: ĕçе çӳрĕн, килте тирпейлĕн, савăт-сапа, япала çăвăн, якатăн, апат пĕçерĕн...

– Çук, – хирĕçлет арçын ача, – эпĕ атте пек пулăп: вăл нимĕн те тумасть, компьютерпа вăйăсем кăна выляса ларать.

РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"

Уважаемые работники образовательных и медицинских учреждений!

Санаторий "Надежда" только с 1 июля по 31 августа 2014 года предлагает Вам санаторно-курортные путевки /10 дней/ по сниженным ценам: ~~19500~~ руб. 18000 руб.

К ВАШИМ УСЛУГАМ: ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.

Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.

Спешите, количество мест ограничено!

Лицензия ЛО-21-01-000616 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

КУПЛЮ

18.Бычков, тёлок, коров, лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

141.Коров, бычков и лошадей. Т. 89030659909.

333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок. Т. 89370144997.

452.ДОМ с участком в любом состоянии. Тел. 89603008787.

474.Дом, участок. Т. 41-38-16.

475.Спецтехнику. Т. 413816.

ПРОДАЮ

4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

5.Блоки керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

8.Гравмассу, песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

10.Сетку-рабицу от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

15.Кирпич, к/блок. Т. 89613393363.

16.СЕТКУ-РАБИЦУ от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

19.Гравмассу, песок, керамзит, бой кирпича. Т. 89033225766.

20.Сетку-рабицу, ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru**

21.Керамблоки, гравмассу, песок. Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

23.Гравмассу, песок, бой кирпича, щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

33.Гравмассу, песок, **щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

35.Блоки керамзитобетонные от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

47.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 489277, 89033899038.

48.Керамблоки, кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

53.Отруби, зерно, к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

58.Гравмассу, щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём,** навоз. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

117.ОКНА Чувашии. Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

124.Песок, щебень, **гравмассу, керамзит,** торф, кирп. бой, **цемент.** Т.: 89033220479, 48-04-79.

157.Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС". Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

172.Гравмассу, керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

178.Гравмассу, песок, цемент. Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

221.Профнастил, металлочерепицу, водостоки, металлосайдинг. Доставка, замеры. Строительство. Т. 8-919-653-43-68.

230.Бетон, раствор, фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

249.БРУСЧАТКУ, плитку тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 89033220479, 8-903-358-06-79.

316.Гравмассу, песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **к/б блоки.** Доставка. Т. 89051974019.

317.Гравмассу, песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

323. Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

341.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

406.Керамблок /20х20х40, 12х20х40/, **гравмассу, песок, керамзит.** Доставка. Т. 89871297072.

450.КЕРАМБЛОКИ пропаренные, вибропрессованные – **недорого.** Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

472.Гравий, щебень, песок, гравмассу, торф, перегной, чернозём, асфальтную крошку, опилки. Т.: 8-906-132-63-78, 484161, 89196526902.

479.ПЧЕЛОСЕМЬИ в новых ульях – 5 тыс руб. Т. 8-961-342-90-59.

УСЛУГИ

51.Бурение колодцев, скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

115.Наркология. Трезвая жизнь. Т. 8-902-663-20-80. Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.

152.Бурение скважин на воду. Т. 89603021293.

229.Кровля, обшивка домов. Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

273.Бурение скважин на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

РАБОТА

110.Монолитчики, плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – А.И.ИЗМАН

Чăваш хĕрарăмĕ

Сырăнмалли индекс: 11515

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăçăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ. Тираж 7613. Заказ 2443.